Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮНЬ 9 КĔÇНЕРНИКУН
130 (4943) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Орденлă Чăваш республикĕ

Орденлă Чăваш республикĕн халăхĕ пысăк çĕкленÿпе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленет. Суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Верховнăй Совета депутата суйлама кандидатсем тăратнă чухне пирĕн халăх хăйĕн моральпе политикăла пĕрлĕхне, большевикла парти, унăн Тĕпкомĕ тата йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра таччăн, çирĕп пĕтĕçсе тăнине кăтартрĕ.

Пирĕн халăх çитес суйлавра та, 1937 çулхи декабрĕн 12 мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухнехи пекех, пĕр çын пек пулса карран тухса, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасалĕ. Совет халăхĕ коммунисла партишĕн сасăлать. Мĕншĕн тесен, Совет Союзĕн халăхĕ большевиксен партине пула çеç телейлĕ те савăнăçлă пурнăç илме пултарчĕ, етемлĕх историйĕнче малтанхи хут ĕнтĕ çĕр чăмăрĕн пĕр ултăмĕш пайĕнче социалисăмла общĕство тума пултарчĕ. Совет Союзĕн пысăкран та пысăк çĕнтерĕвĕсене Сталинла Конституцинче ылтăн саспаллисемпе ĕмĕрлĕхе çырса хунă.

ССР Союзĕ—нумай нацилĕ государствă. Кунта пур нацилĕ халăхсем те пĕртан правăлă, ирĕклĕ, пĕртан тивĕçлĕхлĕ. Совет Союзĕн ытти халăхĕсемпе пĕрле, тăван халăхсен туслă çемйинче, чăваш халăхĕ хăйĕн пысăк çитĕнĕвсемпе савăнать. Пур ĕнтĕ чăваш халăхĕн мĕншĕн савăнмалли те! Парти Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ хăй йертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ, Горький облаçĕн пролетариачĕпе большевикĕсем куллен пулăшса пынипе пирĕн Чăваш республикĕ чаплă çĕнтерÿсем турĕ. Чăваш автономине туни, Чăваш республикĕн пур çитĕнĕвĕсем, унăн аталанăвĕ Сталин йулташ йачĕпе таччăн çыхăнса тăрать.

Патша Российĕ „халăхсен тĕрми" пулнă. Унчухнехи асаплă, хĕнхурлă пусмăр пурнăçне „ваттисем халĕ те лайăх астăваççĕ, вĕсем ун çинчен çамрăксене каласа кăтартаççĕ.

Тÿсме çук йăвăр, чухăн пурăннă ĕлĕк пирĕн чăваш халăхĕ. Икĕ хутлă пусмăра чăтнă вăл. Чăвашсем çĕршерĕн, хăйсен хура пÿрчĕсене хупса хăварса, çемйипех çăкăр шырама Атăл çине, Кама çине тата ытти çĕре те тухса кайнă.

Йĕпе çине сапа тенĕ пек, çуклăх çумне культурсăрлăх, тĕттĕмлĕх хутшăннă. Çуклăх, „тĕттĕмлĕх, трахомă—чăваш халăхĕнчен уйăрălма пĕлмен. Патша, улпутсем, капиталистсем, пупсем, кулаксем чăваш халăхне тĕттĕмре усрама тăрăшнă. Акă пĕр тĕслĕх: Чĕмпĕрти жандармăсен корпус начальникĕ патшана çапла „аслă" сĕнÿ çырса панă: „халăх мĕн чухлĕ тĕттĕмрех, çавăн чухлĕ ăна алăра тыткалама çăмăлтарах. Çак йĕркене шута илсе тăрса, чăвашсен начальникĕсем чăваш халăхне малашне те тĕттĕмрех хăварма мĕнпур вăйран тăрăшаççĕ", тенĕ. Çак ирсĕрле, намăсла хут çине Николай патша хăй: „уйрăмăнах хисепе илме Стрекалева пĕлтерес",—тесе çырса алă пусса хунă.

Кивĕ самана ĕмĕрлĕхе пăнчăхрĕ. Аслă Октябĕр революцийĕ чăваш халăхне чăн-чăн ирĕклĕ, телейлĕ, пуйан та культурăлă пурнăç пачĕ. Пирĕн республикĕн Конституцийĕн 1-мĕш статйинче: „Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмла государстви пулса тăрать",—тесе çырнă. Çĕр, çĕр айĕнчи пуйанлăхсем, шывсем, вăрмансем, савăтсем, хапрăксем т. ыт. те—социалисăмла харпăрлăх, халăх пурлăхĕ. Кайа йулнă çĕршывран пирĕн республика промышленнăçлă, социалисăмла йалхуçалăхлă, формипе—нацилĕ, содержанийĕпе—социалисăмлă культурăлă, орденлă республика пулса тăчĕ.

Чăваш республикĕн çĕнтерĕвĕ—ленинла-сталинла наци политикин çĕнтерĕвĕ. Пирĕн республика талкишĕнче пурăнакан чăваш, вырăс, тутар, мордва тата ытти нацилĕ ĕççыннисен çирĕп туслăхĕ, вĕсен пĕтĕçĕвĕ, пултарулă хавхаланăвĕ Чăваш республикĕн економикипе культурине вăйлăн çĕкленме май пачĕ.

Чăваш çĕршывĕ ĕлĕк промышленнăçла предприйатисем курман. Халĕ пирĕн республикăра малта пыракан техникăпа пуйанлатнă пысăк хапрăк-савăтсем ÿссе çитрĕç: Çĕмĕрле те Куславкка комбиначĕсем, Канашри вакунсем йусакан савăт тата ыт. те. Ĕлĕк шурлăхлă вырăнсем пулнă çĕрте, сĕм вăрмансенчех хуласемпе рабочисен посёлкисем çитĕнчĕç (Çĕмĕрле, Куславкка, Буинск т. ыт. те.) Çулран çул ÿсет чăваш рабочийĕсен хисепĕ. Революциччен чăваш çĕршывĕнчи предприйатисенче 1100 çын рабочи пулнă пулсан, халĕ пĕр Çĕмĕрле комбинатĕнчех 2000 рабочи шутланать.

1938 çулта промышленнăç них çанхинчен вăйлăн ÿсмеле. Совет правительстви кăçал пирĕн промышленнăçа укçа-тенкĕ иртнĕ çулхинчен 4 хут ытларах—41 мелйун тенкĕ ытла хывать. Республикăн центрĕ—Шупашкар хули—промышленнăçлă центр пулса тăмала. Шупашкарта кăçал пысăк савăтсем тума тытăннă. Економикă тĕлĕшĕнчен, çавăн пекех культура тĕлĕшĕнчен те, хăварт ÿссе пыма Канашран Шупашкара чукунçулĕ килсе кĕни хытă пулăшĕ.

Чăваш республикĕн йалхуçалăхĕнче те пысăк улшăнусем пулчĕç. Ĕлĕкхи вак хуçалăхăн уйхирсенче 1684 пысăк йалхуçалăх ĕртелĕсем çитĕнчĕç. Акакан çĕр лаптăкĕнче социалисăмла сектăр 90,9 процента çитиччен ÿсрĕ. Чăваш уйхирĕ—ĕлĕк сухапа йăвăç сÿресĕр пуçне урăх нимĕн те курман пулсан, халĕ уйхир йалхуçалăхĕн пысăк машинĕсемпе, трактăрсемпе, комбайнсемпе илемленет. Пĕлтĕр пирĕн республикăра 18 МТС пулнă, кăçал каллех 5 МТС хутшăнать. Иртнĕ çул 866 трактăр, 96 комбайн ĕçленĕ, кăçал çĕнĕрен 270 трактăр, 260 комбайн, 300 çейалкă кÿрсе килеççĕ. Чăваш республикĕ иртнĕ çул „халиччен курман вăйлă тырпул туса илчĕ: вăтам шутпа гектартан тĕштырă 15,1 центнĕр илнĕ. Колхозсем нумайĕшĕ гектартан 100-шер пăт илнĕ. Орденоносец Острйаков йулташ председательпулса ĕçлекен „Хĕрлĕ Туçа" колхоз тĕштырă гектартан 160-шер пăт илнĕ.

Халăх хуçалăхĕпе пĕрлех культура та хăвăрт ÿсет. Ĕлĕк Чăваш республикĕнчи çĕр талкăшĕнче пурăнакан чăваш халăхĕ хушшинче хут пĕлекен çынсем 18 процент çеç, 75 проц. таран трахомлă пулнă пулсан, халĕ пирĕн республикă—талкăшпех хута пĕлекен çынсемлĕ, культурăла çĕршыв пулса тăче. Трахома пĕтет, 16 процент çеç йулнă. Республикăра тĕрлĕ шкулсем, библиотекăсем, канмали çуртсем, театр, киносем йышлăн хутшăнчĕç. Пирĕн республикăра 36 хаçат тухать. Тĕлĕнмеле чаплă çынсем—çĕнĕ кадрсем: инженерсем, учительсем, тухтăрсем, агрономсем, вăйлă тырпул мастăрĕсем, стахановецсем—Ленин—Сталин партине чĕререн парăннă çынсем çитĕнчĕç. Пирĕн республикăра халĕ орденоносецсем çирĕм çын ытла. Чăваш халăхĕн çак çĕнтерÿсем пирĕн парти халăх тăшманĕсемпе—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла, фашисла бандăсемпе хăйаран кĕрешсе, вĕсене тĕпрен пĕтерсе пынипе пулнă.

Халăх тăшманĕсем кив самана йĕркине кайала таврăрма, халăха каллех капиталисăм чуралăхĕнче хăварма, пирĕн çĕршывăмăра сутма шутланă. Анчах пулаймарĕ вĕсен ĕмечĕ. Вĕсене аслă коммунисла парти, халăх пулăшнипе мухтавлă НКВД органĕсем çапса çĕмĕрчĕç.

Совет халăхĕ хăйĕн çĕршывне вĕçĕмсĕр йуратать. Çак йуратăва епĕр уйрăманах иртнĕ суйлавра тата халĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра аван куратпăр Совет халăхĕ Верховнăй Совета партин шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, пирĕн çĕршыва татах пысăкрах çитĕнÿсем патне илсĕ кайма пултаракан çынсене суйласа йарĕ.

Паллă ткачихăсен—Виноградăвăсен çĕнĕ çитĕнĕвĕ

ВИЧУГА (Ивановă облаçĕ), ийунĕн 7-мĕшĕ (ТАСС). Мускаври Промышленнăç Академийĕнче вĕренекен ткачихăсем—ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ Йевдокийа Виноградăвă тата Середски суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Марийа Виноградăва РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕн кунне хатĕрленнĕ май çĕнĕрен чаплă çитĕнÿ тунă.

Вĕсем Вичугăна каникула таврăннă: Унта вĕсем вĕренме кайиччен иккĕшĕ те Ногин йачĕпе тăракан хапрăкра 216 станок çинче ĕçленĕ. Паллă ткачихăсем-орденоносецсем хăйсем ĕçленĕ ткацки цеха пынă та 234 станок çинче ĕçлеме тытăннă.

Вĕсем иккĕшĕ те çмена ри нормăна иртерсе тултарнă.

Депутата суйлама палăртнă кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулни

РСФСР Верховнăй Советне суйлас кун çывхарса çитет. РСФСР-ти хуласемпе йалсенче суйлав умĕнхи нумай çынлă митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ, вĕсенче халăхсем шанса суйланисем, халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем—РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандитатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулаççĕ.

Усть—Боровскри (Соликамски районĕ. Свердловск облаçĕ) хут комбинатне тунă çĕрте ĕçлекенсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă хăйсен кандидатне Иван Гаврилăвич Золотина ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Строительсен клубне 500 ĕççынни ытла пухăннă. Пухура Золотин йулташ сăмах тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла каланă:

— Мана Совет влаçĕ ÿстерчĕ, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ÿстерчĕ, çав партин членĕнче епĕ 19 çул хушши тăратăп.

Капиталисăм саманинче епĕ çав тери начар та тискер пурнăçпа пурăннă. Уралта пуç пулса пурăннă савăт хуçисем мана 12 çул хушши калама çук хыттăн експлоатацилерĕç. Çуклăх, выçлăх тата ĕççĕр тăрса йулни—час-часах пулнă манăн пурнăçра.

Çаксем ĕнтĕ ĕмĕрлĕхех тĕп пулчĕç. Пирĕн патра, Совет çĕршывĕнче ĕççĕр тăрса йуласси çук. Ĕçлев халĕ хисеплĕх, мухтавлăх, паттăрлăхпа хăйулăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Çав çĕнтерÿ патне илсе пычĕ те пире Сталин йулташ.

Есĕр мана государствăла пысăк ĕç шанса паратăр, есĕр шаннине епĕ ĕçпе кăтартма тăрăшатăп.

Йышăннă резолюцире строительсем хăйсен çасĕсене Золотин йулташшăн парасси çинчен тата суйлав кунне производствăра çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илме пулни çинчен пĕлтернĕ.

Пучежре (Иванăвă облаçĕ) хулари служăщисемпе рабочисем тата Пучеж районĕнчи колхозниксем суйлав умĕнхи митингра Йужски суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă хăйсен кандидачĕпе, Пестаковски МТС-нчи трактăр отрйачĕн бригадирĕ Александра Михайлăвнă Макаравăпа тĕл пулнă. Суйлавçăсем (3 пин ытла çын) Макаравă йулташа хĕрÿллĕн саламланă.

Макаравă йулташ митингра çапла каланă:

— Йужский суйлав округĕнчи суйлавçăсене пурне те, вĕсем мана аслă чыс тунăшăн, ырă сунса тав тăватăп. Йужский суйлав округĕнчи суйлавçăсене: çав есĕр шаннине епĕ ĕçпе кăтартатăп. Мана коммуниссен партийĕ вĕрентсе ÿстернĕ. Çынсем çине Сталинла тăрăшса пăхни кăна, совет влаçĕ кăна пире, рйадовой работниксене, государствă ĕçĕн деятелĕсем пулма май пачĕç. Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн епĕ хăмăн мĕн пур вăйа, кирлĕ пулсан пурнăçăма пама пулатăп.

(ТАСС).

Аслă сатăстине асăнни

ТАМБОВ, ийунĕн 7-мĕшĕ. Вырăссен аслă селекционерĕ Иван Владимирăвич Мичурин вилни виçĕ çул тултарнине асанса Мичуринск хула совечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленума 2 пине йахăн ĕççыннисем пухăннă.

Генилĕ сатăсти пурнăçĕпе тата унăн ĕçĕсем çинчен доклад итленĕ.

И. В. Мичурина пытарнă çĕрте тунă вĕренÿлĕ-опытлă участкăна Мичуринск ĕççыннисем пысăк интереспа çÿреççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра усă курман вырăнта халĕ коллекци питомникĕ тунă, ку питомникре Мичурин пахча ÿстернĕ сăтпа пахча ÿсен таранĕсем, пурте пур. Сăт-пигомник И. В Мичурина хисеплесе тунă чĕре те паха памйатник пулса тăрать.

(ТАСС).

Чукунçул транспăрчĕн май уйăхĕнчи ĕçĕ

ССР Союзĕн чукунçул транспăрчĕн 1938 çулхи май уйăхĕнчи ĕçĕн итогĕсене тунă. Вĕсем сталинла Халăх Комиссарĕ Л. М Кагановић йулташ йертсе пынипе чукунçул работникĕсем çĕнĕ çитĕнусем тунине кăтартса параççĕ.

Май уйăхĕнче талăкра вăтамăн 92.626 вакун таварсем тийене—вăл плана 105,3 процент тултарни пулать. Талăкра вăтамăн 92 525 вакун таварсем пушатнă, вăл плана 103,1 процент тултарни пулать.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

— Ийунĕн 6-мĕшĕнче ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмели заёмăн тиражĕ пĕтнĕ. Тираж Совет Белоруççин столицинче—Минскра пулса иртнĕ.

— Совет Союзĕнче çурхи шыв вăхăтĕнчи икĕ уйăх (апрел-май) хушшинче 4 мĕлйун центнĕр пулă тытнă. Иккĕмĕш кварталта пулă тытса хатĕрлес плана 64,4 процент тултарнă.

Пур сасăсене те—сталинла блок кандидачĕсемшĕн парар!

Ардатăв суйлав округĕнчи (Горьки облаçĕ) 12 пин суйлавçа хăйсен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа Личадейевски колхоз председателĕпе—Николай Кузмич Гордеевпа тĕл пулнă. 93 колхозри колхозниксем митинга илемлетнĕ урапасемпе автомашинăсем çине ларса пынă.

Личадейевски колхоза,—ăна Гордеев йулташ йертсе пырать,—иртнĕ çулта облаçри хисеп хăми çине çырнă, халĕ ăна Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидата çырнă. Колхоз ĕлĕк тырă начар пулнă çĕр çинче вăтамран гектартан 120 пăт тĕштырă туса илнĕ.

Митингра пулнисем хăйсен кандидатне ăша камалпа кĕтсе илнĕ.

Гордеев йулташ хăйĕн сăмахĕнче суйлавçăсене, вĕсем ăна шаннăшăн, ырă сунса тав тунă.—Колхозла хирсенче тата лайăх ĕçлĕпĕр, тăван çĕршыв тата ытларах пуйанлантăр, тата ытларах çирĕплентĕр,—тесе каланă Гордеев йулташ,—кашни колхозник сурт тенче культурăлă та пуйан пурнăç пултăр.

Фрунзе хулинчи 3 мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи икĕ пин çура ĕççыннисем хăйсем Киргиз ССР Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа—Кабыш Темиргалийев йулташпа—механическй савăтри стахановецĕн токарьпе тĕл пулнă.

Митинг резолюци йышăннă, унта округри мĕн пур суйлавçăсене хăйсен сассисене Кабыш Темиргалийев йулташшăн пама чĕнсе çырнă.

Собинри (Иванăвă облаçĕ) „Коммунистический авангард" хапрăкĕн клубĕнче килхуçи хĕрарăмсем-суйлавçăсем тата хапракри вата работницăсем,—вăл работницăсем халĕ пенси çине кусна,—хăйсен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа Йефросини Игнатйевнă Йерцевă йулташпа тĕл пулнă.

Йерцевă йулташ пĕр авăр хапрăкесенче вăтăр çул ытла ĕçленĕ. Вăл çамрăк чухнех революцилĕ ĕçхĕма хутшăннă. Йулашки вăхăтра Ленин йачĕпе тăракан хапракра парторг пулса ĕçленĕ. Халĕ ăна ПСК(б)П Собински райком секретарне суйланă.

Власăвă йулташ митингра çапла каланă:

— Пайан епĕр хамăран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа Йефросини Игнатйевнă Йерцевăпа тĕл пултăмăр. 1905 çулта унăн пиччĕшне—Михаил Лакина йĕплетискеррĕн вĕлернине епĕ астăватăп, пирĕн районри пĕр хапрăка унăн йатне панă. Ăна черносотенцăсем вĕлернĕ, мĕншĕн тесен вăл експлоататăрсем çинчен тĕрĕссине каланă. Ун чухне революцилĕ ĕçхĕма Йерцевă йулташ та хутшăннă: вăл хăйĕн пиччĕшне листовкăсем салатас ĕçре пулăшнă. Йерцевă йулташ хăйĕн мĕн пур пурнăçне халăх телейĕшĕн панă. Уçăмлă та кăмăллă работница, партин шанчăклă хĕрĕ; çынсем [illegible] кăм вăл Йерцевă. Ăна РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнине епĕ хĕрÿллĕн саламлатăп, пур суйлавçăсене те хăйсен сассисене уншăн пама чĕнетĕп, тенĕ. (ТАСС).

136 пин кенаф тата кăнтăрти кантăрсем

Союзри колхозсем сÿс тумалли çĕнĕрен культурăсене—кенаф тата кăнтăрти кантăр çене анаçлăн çитĕнтереççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем çав культурăсен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тăвĕç. Краснодар крайĕнчи Буденный йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта 123 гектарлă лаптăкра кашни гектарĕнчен 13 тонна кенаф тунине туса илнĕ. (Вăтам хисепне крайра кашни гектартан 2 тонна çура илнĕ). Кабардино-Балкар АССР-чи „Джулат" колхозри Жинтигудăв йулташ йертсе пыракан звено вăтам шутпа кашни гектартан 17 тонна пуç арса илнĕ. Çак колхоз пĕлтĕр кенаф ларса тунинчен пĕр мĕлйун тенкĕ ытларах тупăш илнĕ.

Узбекский ССР-чи „Майак", колхоз та кенафран мĕлйуншар тенкĕ тупăш илет.

Кăçалхи çуракинче колхозсем 42 пин гектар кенаф тата 94 пин гектар кăнтăрти кантăр акса хăварнă. Кенаф йышăнакан лаптăка пĕтемпех совет ăн çамрăк учонăйĕсем шухăшласа кăларнă селекцилĕ варлăхсемпе акса хăварнă. Çак сурсем малтанхи вăхăтра сарăлнă суртсенчен 15 кун маларах пулса çитеççĕ.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Польшăри хресченсен фашисăма хирĕçле митингĕсем

ВАРШАВА, ийунĕн 7-мĕш. Ийунĕн 5 мĕшĕпе 6 мĕшĕнче Польшăра пур çĕрте те фашисăма хирĕçле хресченсен нумай çынлă митингĕсем пулса иртнĕ.

Польша пичечĕ çав митингсенче хĕрарăмсем тата хресчен çамрăкĕсем активлă хутшăннине палăртать. Чылай хуласемпе йалсенче хресченсен демонстрацийĕ çумне рабочисен делегацийĕсем хутшăннă.

Польшăри влаçсем „йĕркелĕхе сыхлас" тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăннă. Йалсене вăйлăн хĕçпăшаланнă полицисем йанă.

Митингсем организацилекенсене Польшăри Гитлер хыççăн пыракан йут çĕршыв ĕçĕсен министăрĕн Бекăн тулти политикине хирĕçлесе лозунгсем кăшкарма хытă чарнă. Çакăн пекех политикла ĕçсемшĕн хупса лартнисене амнисти пама ыйтма чарнă.

Хĕвелтухăç Галицинчи чылай районсенче хресченсем хушшинче революцилĕ шухăшсем пуринчен те ытла вăйлă, çав районсенче митингсем туса иртерме чарнă.

Польшăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, митингсене мĕлйун çын хутшăннă.

Митингсене тума чарнă пулин те, митингсем пĕтĕм çĕршыва саварса илнĕ.

(ТАСС).

УКЕРЧĔК СИНЧЕ: Республикăлă Испани çарĕн бойецĕсем хăйсен культурăлă пĕлевне хăпартас тĕлĕшпе кружокра вĕренеççĕ.

(Союзфото).

Фашиссен самольочĕсем Франци çĕрĕ çинче вĕçеççĕ

Францири пичет мĕн çырать

ПАРИЖ, ийунĕн 7 мĕш (ТАСС). Ийунĕн 6 мĕшĕнче фашиссен самольочĕсем Франци çĕре çине çĕнĕрен вĕçсе пынă.

Çав вĕçевсем Францири ĕççыннисен массисене тата унти общественнăçа калама çук хыттăн тарăхтарнă.

Францири чи пысăк хаçатсем çырнă тăрăх, фашиссен самольочĕсем Франци çĕре çине Францинпе Испани хушшинчи чикĕне хупмала тутарас, çапла вара республикăлă Испанине пĕтĕмĕшпех блокада туса хурас шутпа пырса тапăнаççĕ.

Кун ăр пуçне, Франци хаçачĕсенчен хăшперисем çапла паллă туса çыраççĕ: фашиссен самольочĕсем ийунĕн 5-мĕшĕнче пырса тапăнни Францине хирĕç вăрçăпа тухма хатĕрленес йĕнпе Германипе Италин генеральнăй штабĕсене интереслентерекен вырăнсене ÿкерсе илес тĕллевпе пулнă.

Франци коммунистсен хаçачĕ—„Юманите" Франци çĕре çине пăрахнă бомбăсем—Италинче тунă-скерсем, тесе палăртать.

Китайри вăрçă

ХАНЬКОУ, ийунĕн 6-мĕш. (ТАСС). Йулашки кунсенче Çурçĕр Китайра пысăк çапăçусем Лунхайск чукунçул районĕнче пулса пыраççĕ. Йапони командованийĕ унта пысăк çарсем тата механизациленĕ часĕсем илсе пырса тултарнă. Ийунĕн 4-мĕшĕнче çĕрле Китай çарĕсене Ланьфынрен тухса кайма тивнĕ. Ийунен 5-мĕшенче каçалапа Йапони чаçĕсем Кайфын патне çитсе тăнă.

(ТАСС).

***

Йапони авиацийĕ Кантон çине (Кăнтăр Китайри пысăк хула) кашни кунах пырса тапăнать, хулари халăхсем йышлăн пурăнакан районсем çине бомбăсем пăрахать. Йапони самольочĕсем хĕрарăмсене те, çамрăк ачасене те хĕрхенмеççĕ. Çакăр кун хушшинче кашни кун пырса бомбăсем пăрахнипе 6 пин çын вилнĕ.

Ийунĕн 6-мĕшĕнче Йапонин 40 самольочĕ хула çине 100 бомбă пăрахнă 500 çынна йахăн вилнĕ тата 1.000 çын аманнă.

(ТАСС).

***

Йулашки кунсенче Йапони самольочĕсем Кантон çине—кăнтăр Китайри чи пысăк хула çине хыттăн бомбăсем пăраххаççĕ. Ийунĕн 5-мĕшĕнче хула çине Йапонин 50 самольочĕ тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе хулари лăпкă пурнăçпа пурăнакан халăхсем хушшинче 200 çын вилнĕ.

Ийунĕн 6-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем Кантон çине татах икĕ хутчен пырса тапăннă. Хула çине пурĕ 100 бомбă ытла пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем 300 çын шутланать.

(ТАСС).

Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем!

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлăр!

Герасим Иванăвич ИВАНОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йелчĕк суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Куславкка районĕнчи „Динамо“ „Çĕнĕ пурнăç“ тата Йежов йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем Йелчĕк суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Иванов Герасим Иванăвича—Чăваш большевиксен руководительне, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн пĕррĕмĕш секретарне палăртрĕç.

Герасим Иванăвич Иванов 1905 çулта февраль уйăхĕнче, Тăвай районĕнчи Тĕмер йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă.

1918 çулта йалти двухкласнăй шкулта вĕренсе тухнă. Хăйĕн вĕçĕвне малала пăсасшăн вирлĕн тăрăшнă пирки чухăн пурăннă пулин те, Иванов йултăш 1918 çулта Канашри педтехникума вĕренме кĕрет. Анчах Иванов йултăшăн педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухма май килмест. Атăл тăрăхĕнче выçлăх пулнă пирки, 1921 çулта вĕренме пăрахма тивет.

1923 çулта Иванов йултăш вырăсри комсомол организацийĕ пулса ĕçлет. Çав çулах вăл Чăваш облăçĕнчи Совпартшкула вĕренме кĕрет, 1925 çулта вĕренсе тухать. Вĕреннĕ вăхăтра вăл ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕнче ĕçлет.

1925 çулта Иванов йултăш Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Парти ретне кĕрет.

1925 çулхи декабĕр уйăхĕнчен пуçласа 1926 çулхи февраль уйăхĕччен Тĕмер вулăçĕнче Вулĕçтăвкомĕн председательне, 1926 çулхи октябĕр уйăхĕнчен пуçласа ПСÇЛКС Çĕрпÿ уйес комитечĕн секретарĕ, 1927 çулхи август уйăхĕнче Йĕпреç районĕнчи Оргбюро членĕ тата парти райкомĕн секретарĕн заместительне пулса ĕçленĕ. 1928 çулхи ийуль уйăхĕнчен пуçласа ПСК(б)П Шупашкар райкомĕнче çав ĕçрех ĕçлет.

1932 çулта Иванов йултăш Ленинградри Сталин йачĕпе тăракан университетран вĕренсе тухат, Чăваш парторганизацинче ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропгруппинче ĕçлет. ПСК(б)П Тĕпкомĕн пропгруппинче ĕçленĕ чухне Иванов йултăш хăйне массăсене марксисăмленинисăм никĕсне лайăх та тĕрĕс ăнлантарса пама пултаракан талантлă пропагандист пулнине кăтартрĕ.

1933 çулхи ийуль уйăхĕнче ăна ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн çекретарне суйлаççĕ, кунта ĕçре вăл 1937 çулхи ийуль уйăхĕччен ĕçлет. Çак вăхăтра вăл тăтăшах ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн членĕнче тăнă.

Йетĕрне районĕнчи парти организацинче ĕçленĕ чухне те Иванов йултăш хăйне социалисăм строительстви ĕçĕшĕн, колхозниксен пурнăçне пуйан та культурăлă тăвассишĕн хĕрÿллĕн кĕрешекен аста та пултарулă организатăр, активлă работник пулнине, партин тĕп çулйĕрне тĕрĕс тытса пынине кăтартрĕ.

1937 çулхи ийуль уйăхĕнче Чăваш республикĕнчи парти организацин XVIII конференцийĕ Иванов йултăша Обком пленумĕн членне суйлат. Пленум ăна Обком бюровĕн членне тата парти органĕсене йертсе пыракан пайăн заведуйушчине суйлат. 1937 çулхи çентябĕр уйăхĕнче Обком пленумĕ ăна ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн иккĕмĕш секретарне суйласа лартат, нойабĕр уйăхĕнчи пленум ăна Обкомăн пĕррĕмĕш секретарне суйлат.

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Г. И. Иванов йултăша ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă.

Иванов йултăш хăйĕн пурнăçне пĕтĕмпех Ленин—Сталин аслă партин ĕçне парат. Вăл тăшмансене хирĕç çирĕп кĕрешекен, партин тÿрĕ ывăлĕ тата пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн патриочĕ пулса тăнине кăтартрĕ.

Филипп Алексейĕвич МАТВЕЙĔВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Патăрйел суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Патăрйел районĕнчи Тăранти „Октябĕр йалавĕ“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йултăша кандидата тăратнă.

Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йултăш Чăваш республикĕнчи Шăмăршă районĕнче Палтийĕл йалĕнче вăтам хресчен çемйинче 1902 çулта çуралнă.

Матвейĕв йултăш 1921 çулта педагогика курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Матвейĕв йултăш 17 çулта чухне, 1919 çулхи март уйăхĕнче комсомола кĕнĕ. Вăл 1928 çулччен комсомол ĕçĕнче активлăн ĕçленĕ. Çак ĕçре вăл йачейкă бюро членĕнчен пуçласа ПСÇЛКС Обкомĕн çекретарĕ пуличчен ÿснĕ. 1922 çулта Матвейĕв йултăш Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн добровольцĕ пулнă. Хĕрлĕ Çар ретĕнчен таврăнсан комсомол ĕçĕнче тăрăшса ĕçлеме тытăнат. Малтан ПСÇЛКС Патăрйел Укомĕн политикăпа сутĕç пайĕн заведуйушчийĕ тата кайарах Укомăн çекретарĕ пулса ĕçлет. Комсомолăн облăçри конференцийĕнче суйланă тăрăх 1923 çулхи апрел уйăхĕнчен вăл ПСÇЛКС Обкомĕн политикăпа сутĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Кунта ăна часах ПСÇЛКС Обкомĕн çекретарне суйлаççĕ, çак ĕçре вăл 1927 çулхи йанвар уйăхĕччен ĕçленĕ. Унтан вăл профсойуз ĕçне куçат.

1927 çулхи йанвартен пуçласа 1929 çулхи ийуль уйăхĕччен йалхуçалăх рабочисен сойузĕн Обкомĕн председателĕнче, 1929 çулхи ийультен пуçласа 1929 çулхи нойабĕрччен Чăваш Облăç профсовечĕн çекретарĕнче, 1929 çулхи нойабĕртен 1931 çулхи март уйăхĕччен йалхуçалăх рабочисен Сойузĕн Горьки крайкомĕн çекретарĕнче, 1931 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа 1932 çулхи апрель уйăхĕччен совхозсенчи выльăх чĕрлĕх ĕрчетес йĕнĕпе ĕçлекенсен профсойузĕн крайкомĕн председателĕнче ĕçленĕ.

1932 çулхи апрельте Матвейĕв йултăша, пултарулă организатăра, çамрăк тата хастарлă работнике, профсойузсен Горьки крайĕнчи Совечĕн председателĕн заместительне суйлаççĕ, кунта вăл 1936 çулхи апрель уйăхĕччен пĕр таталмасăр ĕçлет.

1936 çулхи апрель уйăхĕнче Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн çессийĕ йышăнна тăрăх Матвейĕв йултăша Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне çирĕплетеççĕ.

Матвейĕв йултăш 1924 çултанпа ПСК(б)П членĕ. Вăл йаланах партин активлă членĕ пулса, халăх тăшманĕсемпе—троцкисемпе, зиновьевецсемпе, бухаринецсемпе тата буржуалă националисемпе кĕрешсе пынă. Парти çулйĕрĕшĕн йаланах тĕрĕс ĕçлесе пынă. Матвейĕв йултăш кĕрешÿре, ĕçре ÿснĕ большевик, ăна парти тата комсомол пăхса çитентернĕ.

Вăл Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕ тата ПСК(б)П Обкомĕн членĕ.

Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йултăш Ленин—Сталин ĕçне чĕререн паранна большевик пулса тăрат, вăл партин тĕп çулйĕрĕшĕн активлăн кĕрешет.

Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йултăша ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Патăрйел суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Кçени Данилăвнă ЙАКИМĂВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Палтай суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Майăн çирĕм иккĕмĕшĕ. Çанталăк лăпкă. Тÿпери хĕвел колхоз уйхирĕ çине хăйĕн кĕмĕл çуттинĕ сапат. Кассăн-кассăн ăшă çил вĕрет. Тÿпере тăррисем йура шăрантараççĕ. Палтайри Буденный йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем пайан йулашки куй çĕрулми лартаççĕ. Вĕсен чĕрине сарă хĕвел те, кассăн-кассăн вăшлатса вĕрекен ăшă çил те, тăррисен йуррисемпе кĕввисем те питĕ савăнтараççĕ. Унтан та пысăк савăнăç: пайан вĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама хăйсен суйлав округĕ тăрăх кандидат тăратаççĕ... Хĕвел анса ларчĕ. Колхозри колхозниксем тухăçлă та савăнăçлă ĕç çинчен калаçса шкула утаççĕ.

...Часах пуху уçăлчĕ. Президиум ĕçе тытăнчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхăн йуратнă хĕрне, Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекене, Йетĕрнери спирт савăтĕнчи техноруĸ помощникне—стахановкă Йакимăвă Кçени Данилăвнă йултăша Палтай суйлав округĕ тăрăх кандидата палăртрĕ.

Кçени Данилăвнă 1906 çулта Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хуршĕваш йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл пĕчĕклех хура-шур нумай тÿснĕ.

Йакимăвă йултăш нумай вĕреней-мен. Йалти пуçламĕш шкулăн пĕррĕмĕшпе иккĕмĕш класĕсенчен çеç вĕренсе тухнă.

— 1921 çулта,—каласа парат Йакимăвă йултăш,—мана Мускава аçасен çуртне илсе кайрĕç. Унта 1923 çулччен пурăнтăм. Унтан киле таврăннă хыççăн çентабĕр уйăхĕнче Йетĕрне пульницине санитаркă пулса ĕçлеме кĕтĕм. 1926 çулччен ĕçлерĕм. Çав çулах санитаркă пулса ĕçлеме Йетĕрнери çу çапакан савăта йачĕç. Чылай вăхăт ĕçлерĕм. 1929 çулта мана çпирт савăтне аппаратчицă пулса ĕçлеме илчĕç. Аппаратчицă пулса 1936 çулччен ĕçлерĕм. 1936 çулта мана çпирт савăтĕнчи техноруĸăн помощникĕ пулса ĕçлеме лартрĕç. Халĕ те çавăнтах ĕçлетĕп...

Йакимăвă обчăлă ĕçре вирлĕн хутшăнса ĕçлет. Иртнĕ суйлавра—ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне Йетĕрне суйлав округĕн суйлав комиççи членĕ пулса ĕçлерĕ. Халĕ те вăл Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Йетĕрне хула суйлав округĕн суйлав комиççи членĕ, тата Йетĕрне хула совечĕн, районри потребительсен сойузĕн членĕ.

Йакимăвă йултăш пур çĕрте те çитет, пур ĕçе те тĕплĕ тăват.

— Пирĕн вăл ĕç организатăрĕ, ĕçре пиçнĕ паттăр,—тет савăт директăрĕ Волкăв йултăш Йакимăвă çине кăтартса.

* * *

Палтай суйлав округне кĕрекен колхозсенчи ĕççыннисен, представителĕсем хăйсен округри суйлав умĕнхи канашлăвĕнче Кçени Данилăвнă Йакимăвă йултăш кандидатурине ырласа, ийунĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сассисене уншăн пама, уншăн агитацилеме пулчĕç. Çавнашкалах Палтай суйлав округĕнчи суйлавçăсем ийунĕн 26-мĕшĕнче пĕр суйлавçăсене те Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăракансемшĕн, çĕршывăн паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Кирил Дмитрийĕвич МЕДЙАНИН

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Карач суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Çил вĕрнипе чĕриклетсе ларакан хапха. Тĕттĕм те лутра лапчăк пÿрт. Çакăнта, çак пÿртре 1906 çулта Куславкка районĕнчи Çатрăк йалĕнче Кирил Дмитрийĕвич Медйанин йултăш çуралнă. 1918 çулта Паланкассинчи земский шкулран вĕренсе тухсан, Кирилăн малала вĕренме кайма май пулман. Ашшĕ ăна:

— Вĕрентĕн ывăлăм, çитĕ, çемйери пур çынна та тăрантма манăн вăй çитмест. Санăн та ĕнтĕ ĕçлеме каймала, хăвна çиме хăвăн çакăр тупмала, тенĕ. 1919 çулта Кирил хăйсен йалĕнче кĕтÿре çÿрет. 1919 çул вĕçĕнчен 1926 çулччен хăйсен йал çыннисемпе пĕрле платникре, вăрман ĕçленĕ çĕрте, Атăл çинче сулă йухтарнă çĕрте т. ыт. тĕрлĕрен ĕçре пулат.

Атăл çинче сулă йухтарнă çĕрте ĕçленĕ чухне ПСÇЛКС членне кĕрет.

1927 çултан 1929 çулччен Рабочисемпе Хресченсен Милицинче ĕçлет, 1929 çулта шкула кайса вĕренет. 1930 çулта ПСК(б)Парти членне кĕме кандидата кĕрет. Çак çулхине вăл нихçанхи пек те мар вăйлăн ĕçлет. 1930 çулта хăйсен тăван йалĕнче колхоз организацилет. Йалти кулаксемпе карма çăварсем колхоза хирĕç агитацилеççĕ. Колхоз малтанах йăвăр условисенче пулат. Анчах та Кирил Дмитрийĕвич Медйанин пур вăйран колхозшăн, Ленин—Сталин партин тÿрĕ çулйĕрĕшĕн тăрăшса ĕçлесе, колхоза йăвăрлăхсенчен хăтарат.

Йалти хресченсем колхоза кĕрсе лайăх пурнăçпа пурăнма пуçланă. Колхоз кунран кун ÿссе тĕреклене.

1935 çулта вăл Куславкка райĕçтăвкомĕнче ĕçленĕ, 1936 çулта Куславкка райĕçтăвком председателĕн замеçтителне лартаççĕ. Халĕ Медйанин йултăш Куславкка райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлет. Вăл кашни кунах Ленин—Сталин партийĕ вĕрентнипе ĕçре çирĕпленсе ÿссе пырат.

Нумайах та пулмаст Куславкка районĕнчи Кирăв, Калинин, Каганович йултăшсен йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем Кирил Дмитрийĕвич Медйанин йултăша Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Халĕ Медйанин йултăш кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Карач суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Александра Йефимăвнă ЙЕФИМĂВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Туçа суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Александра Йефимăвă 1915 çулта Кипекçе йалĕнче (Çĕрпÿ р.) çуралнă. Вăл виçĕ çулта чухнех ашшĕпе амăшĕнчен тăлăха йулнă, нуша курса ÿснĕ.

Пурнăç малала шунă. Йалсенче колхозсем организациленĕ. Александра часах, уйрăм хуçалăхпа пурăнса нихçан та çителĕклĕ тулли пурнăçпа пурнăкан пулас çуккине ăнланса илнĕ. Йалта колхоз организациленĕ чухне чи малтан колхоза кĕнĕ.

1928 çултан пуçласа ырма-канма пĕлмесĕр колхозра ĕçлет. Колхоза курайман çынсем тĕрлĕ суйа агитаци сарнине хирĕç колхозри тÿрĕ ĕçпе ответлесшĕн вăйран тăрăшат. Чăн та, малтанхи çулах колхоз вайлă тухăçлă тырпул туса илет. Çавна кура тепĕр çулнех йалти чухăн тата вăтам хресченсем массăлăн колхоза кĕреççĕ.

1934 çулта Александра—уйхир ĕç бригадин бригадирĕ, 1936 çултан пуçласа пайанхи кунччченех колхозри таварлă сĕт-çу ферминче дойаркă пулса ĕçлет.

Александра Йефимăвнă примерлă колхозница-стахановкă пулнине хăйсен колхозникĕсем çеç мар, таврари колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем те аван пĕлеççĕ. Пур çĕрте те унăн паха ĕçĕсем çинчен калаçаççĕ, ăна мухтаççĕ.

Александра Йефимăвă 1937 çулта хăй пăхакан вырăнти йăхла кашни ĕнерен 1000-шер литр сĕт суса илнĕ. Колхозра вăл стахановла ĕçлессине пуçарса йаракане шутланат. Кăçал вăл фермăри кашни ĕнерен 2000 литртан кайа мар сĕт суса илме обйазательства илнĕ.

Лайăх тата кăтартулă ĕçленĕшĕн Александра Йефимăвă йултăша колхозра виçĕ хутчен премиленĕ. 1938 çулта республикăри йалхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан стахановецсен слотĕнче пулнă.

Халĕ вăл йаланах хăйĕн политикăлă пĕлÿлĕхне хăпартассишĕн тăрăшса ĕçлет. Ленин тата Сталин кĕнекисене вуласа, вĕсен ĕçĕсемпе, пурнăçĕпе паллашат. Колхозри пуйан, та культурăлă пурнăçшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Çĕрпÿ районĕнчи „Коснарийа“ колхоз членĕсем „Ĕмĕт“ колхоз колхозницин—Александра Йефимăвнă Йефимăвă йултăшăн кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă. Ăна халĕ Туçа суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Михаил Çеменăвич КНЯÇЕВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йункă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Михаил Çеменăвич Княçĕв йултăш 1880 çулта Тутаркас районĕнчи Пушкăрт йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Аслă Октябĕр революциччен вăл пурлă-суклă пурнăçпа асапланса пурăннă. 1893—1894 çулсенче Михаил кĕтÿ кĕтнĕ. Ун хыççăн 4 çул хушши Винокурăв хуçа патĕнче атă-пушмак мастерскойĕнче ученик пулса ĕçленĕ. Кун хыççăн икĕ çул хушши Тури Пăрнашри Клементйĕв кулак патĕнче ĕçлесе пурăнат. Çапла йăл 1916 çулччен, хăйне патша çарне илсе кайиччен, хуçасем патĕнче ĕçленĕ. Çартан аманса килнĕ хыççăн, Октябĕр революци вăхăтĕнче, Михаил Çеменăвич Улатăр хулинче ĕçленĕ.

Михаил Княçĕв Пушкăртра йалти чухăнсен комитетне организациленĕ. Михаил 1919 çулта большевиксен парти ретне кĕрсе, хăйсен йалĕнче парти йачейки организацилет. Вăл йачейкăра 2 çул хушши йачейкă председателĕ пулса ĕçлет, 1921 çулсенчен пуçласа Княçĕв йултăш государствăн отделлă ĕçĕсенче ĕçлеме пуçлат.

Обшчĕствăлă пысăк ĕççене туса пырса хăйĕн идейлă-политикăлă пĕлÿне кунран-кун, çине тăрса ÿстерсе пырат.

Михаил Княçĕв 1928—31 çулсенче партин Горький крайĕнчи контроль комиççи членĕ пулса ĕçленĕ. Вăл „Çĕнĕ çул“ колхозăн организатăрĕ. 1931 çулта ăна Пушкăрт йалсовет председателне суйлаççĕ. Çав хушăрах 1934 çултанпа „Çĕнĕ çул“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче парторгăн заместителĕ пулса ĕçлет. Халĕ те вăл йалсовет председателĕ. Вăл йертсе пыракан йалсовет пур ĕçре те малта пырат. Çак çулсем хушшинче вăл совет аппаратĕнчи бÿрократисăма хирĕç хастарлăн кĕрешсе пычĕ, партирен тата совет аппаратĕнчен халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла бандитсене тата буржуалă-националиссене тасатас тĕлĕшпе активлăн ĕçлесе хайаррăн кĕрешсе пычĕ. Михаил Çеменăвич çирĕп большевик, халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр иккĕленмесĕр кĕрешекен, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, рабочисемпе хресченсен хаваслă та телейлĕ пурнăçĕшĕн хăйĕн мĕн пур вăйне хуракан колхозник.

Ăна, Михаил Çеменăвич Княçĕва, Пушкăртри „Çĕнĕ çул“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсен 225 çынлă пĕрлешÿлĕ пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕ. ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Йункă суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ Княçĕв кандидатурине регистрациленĕ.

Прок. Йаргуньин.
Вир. Мĕтри.

Андрей Михайлăвич КРАСНОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ ССР Союзĕнчи пур вырăнсенчи пекех „Çĕмĕрле“ суйлав округĕнче те чăн-чăн аслă праçник пулса тăчĕ. Çав кун округри пĕтĕм суйлавçăсем урнăсем патне пырса, хăйсен сассисене çĕршывăн чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн пачĕç. Вăл кун Çĕмĕрле суйлав округĕнчи суйлавçăсем ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутатне Андрей Михайлăвич Краснов йултăша суйларĕç.

Краснов й-ша, вăл халăх шанăçне чăн-чăн та тÿррĕн пурнăçланине кура, халĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапайĕв тата ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Халĕ Краснов йултăш кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Турхан суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Краснов Андрей Михайлăвич 1906 çулта, Чăваш республикĕнчи Йетĕрне районĕнче, Тури Ачакра, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл—чăваш,—йалти шкултан вĕренсе тухнă.

1923 çулта Краснов йултăш Çамрăксен Коммунисла Союзĕн ретне кĕнĕ, ленинла комсомолта ку таранччченех активлăн ĕçлет. 1926 çулта вăл ПСÇЛКС волком çекретарĕ. 1926 çулта Краснов йултăш совет ĕçне куçат те хăйсен йалĕнче йалсовет председателĕ пулса 3 çул ĕçлет.

1929 çулта Краснов йултăш производствăна куçат. Вăл Йетĕрнери çпирт савăтĕнче—производствă пуçлăхĕ. Ку савăтра вăл 1931 çулччен ĕçлет. Кунта савăтри обшчĕствăлă пурнăçа активлă хутшăнса, политикă тĕлĕшĕнчен хăвăрт ÿсет.

1929 çулта ăна ПСК(б)П кандидатне илеççĕ. 1931 çулта ПСК(б) Парти членне куçараççĕ. Ударлă ĕçленĕшĕн Краснов йултăша темиçе хут та хаклă премисем панă. 1931 çулăн вĕçĕнче ăна, чи лайăх рабочи-ударник пулнипе, Кострома хулине нормировшчиксен курсне вĕренме йараççĕ. Курсран вĕренсе килсен ăна Йетĕрнери спирт савăтĕнче техник-нормировшчик тăваççĕ. Парти ĕçне парăнса ĕçленĕскерне, социалисăм строительствишĕн активлăн кĕрешекенскере — Краснов йултăша 1933 çулта каллех, чи кайа йулса пынă Шăмат йалсовет председателĕ пулса ĕçлеме куçараççĕ. Кунта вăл аван организатăр пулса ĕç ленине кăтартрĕ, Краснов йултăш йертсе пынипе йалсовет малта пыракансенчен пĕри пулса тăчĕ.

1934 çулта парти райкомĕ Краснов йултăша „Крестьянская газета“ колхоза тĕреклетме йарат. Кунта вăл колхоз председателĕ пулса ĕçлесе, клас тăшманĕсен сатăрла ĕçĕсене кĕске срукра пĕтерет.

Колхоза политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес тĕлĕшпе питĕ лайăх ĕçленĕшĕн, пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Совет правительстви 1935 çулта Краснов йултăша Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăланă.

Краснов йултăш йертсе пынипе Тури Ачак колхозĕ районĕпе çеç мар, пĕтĕм Чăваш республикĕпе малта пыракан колхоз пулса тăчĕ.

1937 çулта та ку колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ,—ыраш гектартан 22 центнĕр, кĕрхи тулă—25 центнĕр.

Пысăк тухăçлă тырпул маçтăрĕ—Краснов йултăш, 1935 çулта колхозник-ударниксен 2-мĕш сйесĕн тата йалхуçалăхĕнче малта пыракансен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕн делегачĕ пулнă.

Обшчĕствăлă-политикăлă пурнăçра Краснов йултăш питĕ активлă ĕçлесе пырат: вăл колхозăн парторгĕ, ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн тата ПСÇЛКС Обкомĕн членĕ пулса ĕçлет.

Андрей Михайлăвич Краснов йултăш халь—ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççин председателĕ. Вăл çĕнĕ те культурлă, пуйан, савăнăçлă пурнăç тăвассишĕн кĕрешекен паттăр Ленин—Сталин партин шанчăклă ывăлĕ.

Суйлав участкинче

ЕЛĔК. Васкасси суйлав участкинче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хĕрсех хатĕрленеççĕ. Халĕ суйлав пулмали çурта тул йенчен те, шал йенчен те хĕрлĕ хăмач çине çырнă лозунгсемпе, партипе правительствăн руководителĕсен сăнĕсемпе илемлетрĕç. Вăрттăн сасăлама 6 пÿлĕм туса хатĕрлерĕç. **П. Иванов.**

Орденлӑ Чӑваш республикӗн политикӑлӑ, экономикӑлӑ тата культурлӑ центрӗ Шупашкар индустрилӗ пысӑк хула пулса пырат

Кив Шупашкар хуҫисем

Украина халӑхӗн писателӗ Т. Г. Шевченко 1857 ҫулта ҫӗнтӑбӗрӗн 17-мӗшӗнче Шупашкар хули урлӑ каиса, хӑйӗн дневникӗнче ҫырнӑ: „Питӗ пӗчӗк, анчах илемлӗ хула. Ытларах мар пулсан, сахалтан та ҫурри унта ҫуртсем мар, чиркӳсем. Пурте кивӗ Мускав архитектурипе тунӑскерсем. Кам валли тата мӗншӗн тунӑ вӗсене? Чӑвашсем валли? Ҫук, православи валли. Мускаван шалти политикин тӗп ҫамхи—православи".

Патша саманинчи уйӗс хули Шупашкар чӑнах та помещиксен, духовенствӑн, вырӑнти национальлӗ буржуази чӑваш халӑхне пусмӑрламалли центр пулнӑ. Восстани тӑвакан хресченсене духовенствӑ лӑплантарма пултарайман чухне, Шупашкартан хресченсен восстанине пусарма ҫар йӑрса тӑнӑ. Кунта питӗ йӑвӑр пусмӑра, мӑшкӑла тӳсейӗн ҫынсене, пӗртанлӑх, йӗркелӗх тума ыйтакансене, патша чиновникӗсем валли налок тӳлейменнисене пиншерӗн-пиншерӗн хӑваласа килнӗ. Вӗсене земски начальникӗсем, округри сутсем, вулӑс старшинисем хуҫиччӗ тӑрӑх хӑваласа пынӑ.

Кивӗ Шупашкар чӑваш халӑхӗн культурлӑ центрӗ те, административлӑ центрӗ те пулайман. Вӑл Хусан кӗперничи уйӗс хули пулнӑ, унта чӑвашсем 400 ҫын пурӑннӑ. Вӗсенчен пуйанраххисем вӑл вӑхӑтра вырӑс помещикӗсемпе, капиталиссемпе, пупсемпе пӗрле пулса, уйӗсри ҫӗҫҫинниснсене пусмӑрласа пурӑннӑ. Ытисем йӑвӑр ҫӗре пулнӑ: сулӑ йухтарнӑ, бурлаксем пулнӑ, купцасен, улпутсен баржисем ҫинчен таварсем пушатнӑ, тийенӗ.

Уйӗс хулинче хӑйсен алликче варман, баржӑсем, магазинсем, ҫӗр, укҫа нумай тытакансем хуҫа пулнӑ. Шупашкар хуҫисем—Ефремовсем, Шемйакинсем, Хлебникаевсем тата ытисем пулнӑ. Вӗсем пусмӑрланӑ, влаҫ вӗсен алликче пулнӑ.

Хула хуҫисем ӗҫсӗр аптранӑ. Хаҫатсем, кӗнекесем, шкулсем вӗсене интереслентермен. Мӗн тусса пурӑннӑ-ха вӗсем? Ӗҫсе-ҫисе, алхасса пурӑннӑ. Хула чан сасси, пылчӑк, тусан айӗнче пулнӑ, хула урамӗсенче ҫӗтӗкҫӑтӑк чухансем ыйткаласа ҫӳрекенсем тулли пулнӑ.

И. Музыкантӑв.

100 ҫул кайала

Чӑвашсен историлӗ архивӗнче, Шупашкар хули думин кучӗсем хушшинче, Шупашкар хулин 1838 ҫулти бюджечӗ пур. Ҫак бюджет тӑрӑх 1838 ҫулта хулана тытса тӑма 11.288 тенкӗ укҫа пани курӑнать. Анчах та ҫак укҫа пуринчен ытла бюрократла аппарата тытса тӑма кайнӑ. Думӑра ӗҫлекенсем 3.788 тенкине хӑйсем илнӗ, полицине тытса тӑма 4.743 тенкӗ панӑ, йулнӑ укҫа хулари ытти расхутсене витмелле кайнӑ.

Пушар командине 400 тенкӗ, хулана йӗркелеме 300 тенкӗ, хулари будкӑсене йусама 120 тенкӗ, масар патӗнчи чиркӗве тытса тӑма 200 тенкӗ, мӑрйе тасатакана 60 тенкӗ, йумӑҫ карчӑка 109 тенкӗ панӑ.

Ҫапла пулнӑ Шупашкар хулин хуҫалӑхӗ 100 ҫул каялла.

Епӗр квалификацилӗ рабочисем пулассӑн

Епӗр иксӗмӗр те чӑваш йалӗнчи хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Хутла сахал вӗреннӗ. Ача чухне Шупашкара килсе курас тесе ҫунаттӑмӑрччӗ. Пире ун чухнехи лутра-лутра сапаланчӑк ҫуртсем те хулан туйӑнатчӗҫ.

Акӑ халӗ хамӑр ҫӗнӗ Шупашкар тунӑ ҫӗрте, социализмӑн аслӑ стройкинче, хутшӑнса ӗҫлетпӗр. Правительствӑ ҫуртне тунӑ ҫӗрте епӗр те ӗҫлемӗ пултарни пире чунтан савантарать. Епӗр ку ҫуртра срукчен туса пӗтерессишӗн тӑрӑшатпӑр. Ҫавӑнпа та кулленех нормӑна иксӗмӗр те йаланах 150 процент таран тултартса пыратпӑр. Строительствӑ пӗтичен епӗр квалификацилӗ рабочисем пулассӑн.

Петрова Акулина,
Ҫергейӗва Татйанӑ.

Шупашкар станци

Пулас Шупашкар вокзалӗ (ӑна тума пуҫланӑ ӗнтӗ) хулари чи хитре ҫуртсенчен пӗри пулать. Тул йенчен вокзала мрамӑр тӗслӗ, шал йенчен тӗрлӗ художествӑлӑ ӳкерчӗксемпе илемлетессӗ.

Вокзал умӗнче пысӑк сквер тата фонтансем пулассӗ.

Кашни кун пилӗк-ултӑ машӑр таварнӑй поиссем, икӗ машӑр пассажирсен поиссем ҫӳремелле. Кунтах чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсем валли тата пысӑк та пахӑ ҫуртсем илемлӗн кураса ларӗҫ.



ИСТОРИЛӖ ДОКУМЕНТСЕМ

(Чӑваш архивӗн материалӗсем тӑрӑх)

Шупашкар хула управине

Шупашкарти чиркӳ-приход шкулӗнчи учительсенчен.

Укҫа-тенкӗ пит кирлӗ пирки, епӗр урӑхӑрӑн вӑл пирӗн чухӑн шкула тытса тӑма, иртнӗ ҫулхисем пек, хӗрӗх (40) тенкӗ те пулин пулӑшу памала тума пултараймӗ-ши тесе тархасласа ыйтатпӑр, ку шкулта кӑҫал иртнӗ 1903 ҫулти пек Шупашкар хулинчи мещенсен ачисем 25 анчах мар, 32 ача вӗренеҫҫӗ. Ҫак ачасем пурте, хресчен ачисем пекех, шкулти учебниксемпе ҫырмали хатӗрсемпе усӑ курассӗ.

Учитель МИХАИЛ СЕРГЕЙЕВ.

Учитель ВЛАДИМИР НИКОЛАЙЕВ.

1904 ҫул, октйабӗрӗн 24-мӗшӗ.

Шупашкар хула управине

Хула управине масар ҫинчи часовнйӑри ҫак ситменлӗхсем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхма тархасласа ыйтатӑп:

1. Ҫын касакан сӗтел пӑркаланать, сӑрламан, ҫурӑксем пур, йун тата ытти йӗпесене йухмалли вырӑн ҫук йухакан йӗпесене пустарма витре те ҫук.

2. Епӗ хушнипе хӑш чухне ҫын касма тивекен фельдшӗрӑн клейонкӑран тунӑ ҫакӑлӑ сапун ҫук, кунашкал сапун ҫын каснӑ чухне питӗ кирлӗ.

Шупашкар уйӗсӗнчи врач ӗҫӗсене тӑвакан ПОКРОВСКИЙ.

Шупашкар уйӗсӗн исправникӗ Паристӑва Шупашкар уйӗсӗн врачӗ Покровский 1904 ҫулхи июнӗн 2-мӗшӗнче ҫакӑн пек акт ҫырнӑ:

„... ҫак числара, ирхине 8 сехетре, епӗр Шупашкар хули пасар плошчӗтне пӑхса тухса ҫакна палӑртрӑмӑр: лавкасемпе йунашарах тислӗк, ҫӳп-ҫап тата улӑм пухӑнса тӑнӑ. Пасар вырӑнӗ тӳрем вырӑнта мар, ҫакна пула кунта тислӗк шывӗ пухӑнса тӑрать, хулана ҫӗрӗк шӑршӑ сарӑлать. Пасар плошчӗтӗ тӗлӗнче Чебоксарка шывне пӗвеленӗ. Халӑх ӗҫме ӑсакан шыв таса мар шывсемпе хутӑшса ҫав тери варалнанӑ, ӑна ӗҫсен ҫывӑхха сийен пулать. Ҫавӑнпа та шыва пӗверен айалтарахран ӑсмала тумала.

Ҫакӑн ҫинчен ҫак актӑна ҫырмала пулчӗ, актӑна Шупашкар уйӗсӗн исправникӗ патне тӑратас".

(Ал пуснӑ).

1914 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне Шупашкарта пулнӑ

Шупашкар уйӗсӗнчи хӗрарӑм гимназийӗ—305 ҫын вӗреннӗ, ҫултаlӑкра 13.276 тенкӗ расхутланӑ.

Духовнӑй училищӗ—129 ҫын вӗреннӗ, ҫултаlӑкра 32.115 тенкӗ расхутланӑ.

Пуҫламӑш шкултан аслӑраххи—1, педкурссем—1 пулнӑ, вӗсенче 224 ҫын вӗреннӗ, ҫултаlӑкра 14.246 тенкӗ расхутланӑ.

Пуҫламӑш шкулсем 3 пулнӑ, вӗсенче 215 арҫын ача, 199 хӗрача вӗреннӗ, ҫултаlӑкра 5.915 тенкӗ расхутланӑ.

Чиркӳ — приход шкулӗ 1 пулнӑ, 71 ача вӗреннӗ, ҫултаlӑкра 847 тенкӗ расхутланӑ.

Шупашкар хулинче 17 чиркӳ пулнӑ.

Пӗр земски пульницӑ пулнӑ. Унта пӗр врач, икӗ фельдшер, фельдшер-акушеркӑсем икӗ ҫын ӗҫленӗ.

Хулара 5670 ҫын пурӑннӑ. Вӗсенчен: дворйансем 39 ҫын, пуп таврашсем 130 ҫын, хисеплӗ граждансем—45, купцасем—22, мещансем—4650, хресченсем—510, отставкӑри тата запасри салтаксем—336 ҫын.

УЙӐП МИШШИ

ШУПАШКАР

Атӑлӑн аш йӗнче
Шыв сасси, хум сасси,
Атӑлӑн ку йӗнче
Чан сасси, пуп сасси.
(Ӗлӗкхи йурӑ).

„Шупашкар, Шупашкар,
Хуласенӗн хули!
Чиркӳ те трактир,
Мунчала та пушӑт..."
Ҫапла чӗ
Улпут-хуҫасенӗн кулли,
Килеттӗмӗр тулли,
Тавӑрнаттӑмӑр пушӑ.

Патша йыттисем кунта
Вӗрнӗ тискер.
Йӗхрем хуҫасем
Йумахланӑ ушаннӑн.
Шупашкар—чӑвашсен
Тӗп хули, тенӗскер—
Хуҫасен,
Пуп-манах таврашсен хули пулнӑ.

Чан сасси
Йанраса минретне пуҫа.
Пуп сасси
Пусмарпа ултава пӑхӑнтарнӑ.
Шыв сасси
Шывлантарнӑ трахомлӑ куҫа,
Хум сасси
Кӑмӑла тӑвӑлла хумхантарнӑ.

Иртсе йулчӗҫ
Ылханлӑ кунсем ӗмӗрӗ.
Пайан аслӑ ҫӗршыв,
Тулли пурӑнӑҫ сачӗ.
Аслӑ Ленинпа Сталин
Хӗвел пек пире
Ҫӗнӗ вӑй, ҫӗнӗ ӗмӗт,
Ҫӗн пурӑнӑҫ пачӗҫ.

Шупашкар!
Ирӗк халӑхӑн ирӗк хули!
Ҫурчӗсем йӗрпе ҫӳлӗ,
Патмаррӑн ҫӗкленчӗҫ.
Хӗвӗшет халӑх
Аслӑ урамсем тулли.
Сачӗсем—пирӗн пурнӑҫ пек
Чечекленчӗҫ.

Чечекленчӗ ҫӗршыв,
Чечекленчӗ хула.
Савӑтсен трубисем
Тӗтӗреҫҫӗ мӑнаслӑн.
Саламлат Шупашкар пайан
Тимӗр ҫула,
Тавраша сас парать
Хурҫӑ уче хаваслӑн.

Атӑлтан саламлат ӑна
Шура пӑрахут.
Аҫтала кайас тен—
Пур ҫӗре те ҫул усӑ.
Унта Атӑл выртать
Вӗҫ хӗррисӗр, ҫапсут,
Кунта—ҫут тимӗр ҫул,
Чашлатать пӑравуҫӗ.

Ирсерен самолӗтсем
Вӗҫеҫ пӗлӗтре.
Пирӗн ҫамрӑклӑх
Ирӗк, телейлӗ, ҫунатлӑ.
Кирлӗ чух епӗр хатӗр
Хӑт хӑш сехетре
Тӑван ҫӗршӗн тӑмашкӑн
Ҫӗнми вӑйхӑватлӑн.

Шупашкар!
Ман тӑван савӑ-йурӑ сӑпки!
Манӑн Ҫеҫпӗл кунта
Савӑ йурӑ шӑратнӑ.
Пирӗн ҫамрӑк поезин
Чи ҫепӗҫ ҫеҫкин
Савӑҫсем килессе кӗтсе
Чуне уратнӑ.

Килчӗҫ, килчӗҫ
Ӗҫ кӗтнӗ чӑваш ачисем!
Вут чӗлхелле
Кӗвӑр чунлӑ савӑҫсем килчӗҫ.
Халӑхра йанӑрасҫӗ
Вӗсен сӑвисем,
Ҫӗршывра тивӗҫпе йанрама
Хӑват илчӗҫ.

Еп тухап ирхине
Аслӑ Атӑл хӗрне.
Чечекри Шупашкар хулине
Саламлатӑп.
Еп курап ирӗк халӑхӑн
Ирӗк хӗрне.
Еп илтеп ирӗк халӑхӑн
Ирӗк йуррине,
Ҫут хӗвелле ҫӗршыв ҫинчен
Йурӑ йурлатӑп.

1938

ЧЕЧЕКЛЕНЕКЕН ХУЛА

Революцичен Шупашкар патша Российӗн пӗчӗк, илемсӗр, промышленноҫсӑр хули пулнӑ. Унта нимӗнле культурӑ та пулман, хула тул йенчен пӑхсан та никама та илӗртмен.

1773 ҫултан пуҫласа 1912 ҫула ҫитиччен, урӑхла каласан 139 ҫул хушшинче, пурӑнакан халӑх шучӗ пӗтӗмпе те 1 пин ҫынна анчах ҫитнӗ. Патша влаҫне сирпӗтсе антарас вӑхӑт тӗлне кунта промышленноҫ предприйатийӗсенчен 3 хӑма ҫуракан савӑт, ерех савӑчӗ, кирпӗч ҫапакан мастерской тата чӑпта ҫапас ӗҫ ҫеҫ пулнӑ. Пӗтӗм промышленноҫ продукцийӗ те 2 мӗлйун тенкӗ ҫитеймен.

5 пин те 500 ҫын пурӑнакан хулара 17 чиркӳ пулнӑ, ҫав вӑхӑтрах пӗр амбулатори кӑна. (Унта пӗр фельдшер) пулнӑ. 50 койкӑлӑ земски пульницӑ пӗрре пулнӑ. Хулара чул сарнӑ лайӑх урамсем, бульварсем, паркӗсем пулман. Хула варӗнчи плошчӗтре тухса ҫӳреме те май пулман, унта йаланах пылчӑк пулнӑ. Атӑл хӗрринче хуҫасен мунчала-чӑпта склачӗсем пулнӑ. Ҫаксем ӗнтӗ буржуази хулана „илемлетессӗн" ҫине мӗнле пӑхнине кӑтартса параҫҫӗ.

1912 ҫулта хулана лайӑхлатас тӗп ӗҫсене тума 2 пин тенкӗ йахӑн укҫа хывнӑ. Кунта кӗперсене, пӗвесемпе ҫалсене тытса тӑрас тата ытти ӗҫсем те кӗнӗ. Ку хула—чӑваш ӗҫҫыннисене хытӑ експлоатацилекен центр, пупсен ултавӗн центрӗ пулнӑ.

Октйабӗр революцийӗ чӑваш халӑхне ирӗклӗ те телейлӗ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларчӗ. Ленин—Сталин наци политикине тӗрӗс тытса пынипе Чӑваш республикине Совет Союзӗнчи малти республикӑсен ретне кӑларчӗ. Партипе правительствӑ халӑхсен пурнӑҫ условийӗ лайӑхлатса пынипе пӗрлех, хула та чечекленсе пычӗ. Октйабӗр революцийӗ ҫӗнтерсен республикӑн центрӗ пулса тӑнӑ Шупашкар хӑйӗн сӑн-питне тӗппипех улӑштарчӗ. Ӗлӗк, патша влаҫӗ чухне, експлоатаци центрӗ пулнӑ хула халӗ культурӑпа, хуҫалӑхпа тата административлӑ центр пулса тӑчӗ.

Промышленноҫ продукцийӗ 16 хут ӳсрӗ. Промышленноҫ предприйатийӗсенче ӗҫлекен рабочисен шучӗ 10 хут ытла ӳсрӗ. Алӑсталӑх промышленноҫӗнче 14 ертел ӗҫлекен тата, вӗсенче кустарсем 1000 ҫын ытла. Хула ӗҫҫыннисен хӑйсен хулинчи предприйатисенчен ҫӗлеме кӗпе-йӗмсем, пуҫа тӑхӑнмаллисем тата ытти таварсене те илсе тӑраҫҫӗ. Шупашкар хулинчи промышленноҫ пӗтӗм республикӑри промышленноҫ продукцийӗн 5 пайӗнчен пӗр пайне чухлӗ продукци парать. Хулари тӗрӗ промышленноҫӗ ҫинчен уйрӑммӑн та пӗлеҫҫӗ.

Ҫамрӑксем вӗтам тата аслӑ шкулсенче вӗренеҫҫӗ. Шупашкарта йалхуҫалӑх, педагогика тата учитель институчӗсем, коммуниста аслӑ йалхуҫалӑх шкулӗ, кооператив, музыкӑ тата коммуналлӑ строительствӑ техникумӗсем; педагогика, медицина тата йалхуҫалӑх рабфакӗсем тата ҫакӑн пекех пуҫламӑшпе вӗтам шкулсем пур. Вӗренекенсен шучӗ 8 пин ҫынтан иртет, урӑхла каласан, революцичченхи шутран 7 хут ытларах. Сталинла икӗ пилӗкҫуллӑх ҫулӗсенче шкул ҫуртсем ҫӗнӗрен 6 тунӑ.

Хулари халӑх хӑйӗн пушӑ вӑхӑтне культурӑлла ирттерет. Кунта академи театрӗ, кино-театр, библиотекӑсем тата ҫавӑн пекех учрежденисемпе предприйатисем ҫумӗнче хӗрлӗ кӗтессем, клубсем тата библиотекӑсем нумай. Ачасене валли пионерсен ҫуртӗ пур, вӗсене валли ача сачӗсемпе ача йаслисене нумай уҫнӑ.

Ҫынсен сывлӑхӗсене упрас тӗлӗшпе те нумай ӗҫсем тунӑ. Шупашкарта поликлиника, пульницӑсем, стационарсем тата ыттисем те пур.

Совет влаҫӗ пулнӑ хыҫҫӑн, хулара пурӑнакансен шучӗ пилӗк хут ытла ӳснӗ.

Шупашкар пӑлламала мар сӑн илсе улшӑнчӗ. Атӑл хӗрӗнче Хресчен ҫуртӗ, кино-театр тата пурӑнмалли нумай хутлӑ ҫуртсем туса лартнӑ. Ӗлӗк питӗ пылчӑк тата лачака пулнӑ вырӑнта, халӗ питӗ илемлӗ паркӗсем иккӗ пур. Шывӑрсем урлӑ каҫса ҫӳреме кӗперсем тунӑ. Хӗрлӗ плошчӗт тавра илемлӗ, ҫӳлӗ ҫуртсем ларӗҫҫӗ.

Пӗр 1937 ҫулта кӑна пурӑнмалли 8 ҫурт тата учрежденисене валли темиҫе ҫурт тунӑ. Вӗсем шутӗнче хулари илемлӗ ҫуртсенчен пӗри—государствӑ банкӗ. Хӑш-пӗр урамри тротуарсене асфальтпа, чулпа тата ытти майсемпе те лайӑхлатнӑ.

Революци хыҫҫӑн хула електричествӑ ҫуттине илчӗ. Хула ӳссе пыни електростанцине пысӑклатса пыма хушрӗ. 1933 ҫулта 1400 киловатлӑ ҫӗнӗ станцине тума тытӑннӑччӗ. Кӑна тума 2621,4 пин тенкӗ укҫа кирлӗ пулнӑ. Ку станци 1937 ҫулта ӗҫе кӗчӗ.

1929 ҫулта водопровод (шыв пӑрки) туса ӗҫе йанӑ. Анчах кӑна та ҫарсах пымалла пулнӑ. 1936 ҫулта ҫак ӗҫе ҫарса пыма тытӑннӑ. Шыв пӑркине ҫарса пыма 1667,7 пин тенкӗ хума палӑртнӑ. Шыв пӑркисем тӑрӑх ҫултаlӑкра 3000 кубла метр шыв парса тӑмала пулать. Ҫак ӗҫе 1939 ҫулта туса ҫитерессӗ.

1932 ҫулта гостиницӑ ӗҫе кӗнӗччӗ. Кунта 180 койкӑ вырнаҫать. Халӗ ку та ҫителӗклӗ мар. Ҫавӑнпа ӗнтӗ тата пысӑкрах гостиницӑсем тӑвас задача тӑрать.

1936 ҫулта 700 пин тенкӗ тӑракан лайӑх мунча туса ӗҫе йанӑ.

Совет влаҫӗ пулнӑ хыҫҫӑн, Атӑл урлӑ каҫас ӗҫ те тӗпренех лайӑхланчӗ. Халӗ Атӑл урлӑ ӗҫҫыннисене моторлӑ кимӗсемпе, паромсемпе, пӗчӗк пӑрахутсемпе илсе каҫаҫҫӗ.

Коммуналлӑ ҫуртӗҫ строительствине тата хулана лайӑхлатас ӗҫе ҫулран ҫулах ытларах укҫа хываҫҫӗ. 1938 ҫулта ҫак ӗҫсене пӗтӗмпех 3 814 пин тенкӗ хываҫҫӗ. Пӑлах ӗнтӗ, ӗлӗкхи „пуҫлӑхсем" хулана лайӑхлатас ӗҫе ҫавӑн чухлӗ укҫа хывасси ҫинчен шутлама та май пулман.

Кӑҫал пурӑнмалли ҫуртсем 3 тӑваҫҫӗ. Вӗсенче 62 хватер пулать. Шыв пӑрки тӑвас ӗҫ сарӑлса пырать, ҫӗнӗ електростанцине туса пӗтереҫҫӗ. Карл Маркс урамӗнче пӗтӗмпех асфальт сарса тухаҫҫӗ. Хулара тавар турттарас тата ҫынсем лартса ҫӳремелли транспорт вӑйланать. Ҫакӑн пекех урамсене ҫутатас, йӑвӑҫсем лартса симӗслетсе ӗҫсене нумайӑн тума палӑртнӑ.

Халӑх тӑшманӗсем коммуналлӑ ҫуртӗҫ строительствинче сатӑрла ӗҫсем туса пычӗҫ. Вӗсен сатӑрла ӗҫӗн йулашкисене кӗске вӑхӑтра пӗтермелле.

Хула малашне тата вӑйлӑн чечекленсе ӳсе пырать. Кунта радиоприйомниксемпе аккумулйаторсем тӑвакан савӑт, резина тата ытти савӑтсемпе хапрӑксем те пулассӗ.

1938 ҫулта ӗҫе кӗрекен Канаш—Шупашкар чукунҫулӗ Шупашкар хулине татах та вӑйлан ӳссе пыма май парать. Ҫаксем ӗнтӗ пӗтӗмпех орденлӑ республикӑ столици—Шупашкарӑн ӳсӗмне кӑтартса параҫҫӗ, вӑл малашне пысӑк промышленноҫлӑ хула пуласси ҫинчен калаҫҫӗ.

М. И. Волкӑв.

Пысӑк малашлӑхлӑ

Темиҫе ӗмӗр хушши Шупашкар тӗттӗм, кивӗ, сапаланчӑк уйӗс хули пулнӑ. Ахальрен мар: „Шупашкар пур хуласенӗн хули". тенӗ. Капла калани, патша Российӗнче те Шупашкартан тӗттӗмрех хула тупма хӗн, тенине пӗлтернӗ ӗнтӗ. Пӗтӗмпех урӑхне куратпӑр халӗ. Чи малтанах—Октйабӗрти Аслӑ революци Шупашкара ирӗклӗ чӑваш халӑхӗн столици туса хучӗ, иккӗмӗшӗнчен—малашне культурӑпа хуҫалӑх йенчен ҫитӗнме анлӑ пуласлӑх уҫса пачӗ.

Йулашки ҫулсенче хула уйрӑмах хытӑ улшӑнчӗ. Ултӑ-ҫичӗ ҫул кайала урамсене мар, Хӗрлӗ плошчӗте те чулпа сарман пулнӑ. Йӗркелӗ тротуарсем, нумай хутлӑ чул ҫуртсем пачах пулман. Хулари ӗҫлекенсем таса ҫывлӑшра канса тӑрас уҫӑлса ҫӳреймен. Атӑл тӑрӑх пӑрахутпа Шупашкара ҫывхарнӑ чухне, чиркӳсемпе начар йӑвӑҫ ҫуртсем ҫеҫ курӑннӑ. Атӑл хӗрри пристанӗ тавраш пырса кӗме питӗ кансӗр пулнӑ. Апла пулин те ку вӑхӑта Шупашкар шкулсем, техникумсем тата аслӑ шкулсем те уҫма ӗлкӗрнӗ. Анчах наукӑпа культурӑ ҫыннисем Шупашкара килме хавас пулман,—килекенсем те хӑраласа ҫеҫ килнӗ. Нумайӗшне хула ытти ҫӗршывсенчен уйрӑм ларни—чукунҫулпа ҫыхӑнмани шиклентернӗ. Ҫавӑнпа та пӗр 5—6 ҫул кайала Шупашкара унӑн малашлӑхӗпе социализм строительствинче хытӑ ӗҫлекен вӗренӗ ҫынсем ҫеҫ килнӗ. Вӗсем йӑнӑшмарӗҫ. Халӗ вӑхӑта Шупашкара вуншар пуҫламӑш, вӗтам, аслӑ шкул ҫуртӗсем, пичет, почтӑ, калаҫакан кино ҫуртӗсем тӑва-тӑва лартрӗҫ. Часах Атӑл хӗрринчи 26 хватерлӗ илемлӗ ҫурт туса пӗтереҫҫӗ. Правительствӑн чи катмар ҫуртне тӑвас ӗҫ те хӗрсех пырать. Нумай тротуарсем асфальтпа витӗнчӗҫ. Ҫитес ҫулсем вӑхӑтра вӗсем ҫеҫ мар, ытти урамсем те асфальтпа витӗнӗҫ.

Шупашкар Совет Союзӗн ытти хулисемпе чукунҫулпа ҫыхӑнчӗ. Вӑл ҫеҫ те мар, Шупашкар хӑй пысӑк хапрӑк-савӑтлӑ хула пулать. Халӗ вӑл савӑтсенчен хӑшне-пӗрне тума тытӑннӑ та ӗнтӗ. Шупашкар ҫывӑхӗнче Совет Союзӗнчи пысӑк гидроелектростанцисенчен пӗрне лартас тӗлӗшпе хатӗрленӳ ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Ку вӑл Шупашкар ҫитес кӗске вӑхӑтрах социализмла культурӑпа тата техникӑлла пысӑк хула пуласси ҫинчен калать.

Епӗр Шупашкар хули Чӑваш халӑхӗн мухтавӗ пуласса тата унта ӗҫлесси кашни гражданинӑн телейлӗ пуласса хытӑ шанса тӑратпӑр.

Проф. Берзинь.

Кӑҫалхи бюджет

1938 ҫул валли хула бюджетне пуре 6 мӗлйун та 183,8 пин тенкӗ ҫирӗплетнӗ. Вӑл шутран пуринчен ытларах хула ӗҫҫыннисен пурнӑҫ тата культурӑпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас ӗҫе расхутланмалла. Акӑ, коммуналлӑ хуҫалӑх валли 2 мӗлйун та 30,5 пин тенкӗ палӑртнӑ, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ йӗнӗпе халӑха ҫутта кӑларас ӗҫ валли 2 мӗлйун та 743,4 пин тенкӗ пахнӑ. Вӑл шутран ҫӗнӗрен шкулсемпе ача сачӗсем тӑвас ӗҫе 923 пин тенкӗ хывать.

Кусемсӗр пуҫне халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫе 621 пин, социаллӑ пулӑшу валли 65,7 пин, пушартан сыхланас ӗҫ валли 288,7 пин тенкӗ ҫирӗплетнӗ.

Хитре те кӑмӑллӑ

Шупашкарӑн вырӑнӗ питӗ лайӑх. Хула ҫине пулас вокзал патӗнчен пӑхсан, ытла та хитре курӑнать.

Епӗ чӑвашсемпе пӗр ҫултаlӑк ӗҫлетӗп. Чӑннипе каламала: лайӑх халӑх, ӗҫлеме йуратаҫҫӗ, дисциплинӑлла пысӑк.

Шупашкара, пур йенчен илсен те, Чӑваш республикин столици тесе чаплипех те калама йурать. Ӗҫе, хӑйӗн ӗҫлекен йуратакан халӑх хӑйӗн тӗп хулине те Атӑл ҫинчи чаплӑран та чаплӑ, чи илемлӗ хула туса хурӗ.

ЦИМБАЛ.

(Канаш—Шупашкар чукунҫул строительствин аслӑ инженерӗ).

Пулас индустрилӗ Шупашкаран кӗтесси

Хулапа йунашар, 25,8 гектар ҫинче, резина йапаласем савӑтне тума пуҫланӑ.

Кӑҫалхи ҫул савӑта тума 3,5 мӗлйун тенкӗ укҫа панӑ.

Ерӗн культурлӑх тӗлӗшӗнчен ку савӑт калама ҫук пысӑк вырӑнта тӑмала. Цехсенче таса, уҫӑ сывлӑш пулать.

Савӑта 1939 ҫулта туса пӗтерсе ӗҫе йамала. Ана йӑлтах туса пӗтерме 15 мӗлйун укҫа кайать.

Таджик СС Республикĕнче вăйлă тырпул пулассине кĕтеççĕ

СТАЛИНАБАД, ийунĕн 6-мĕшĕ (ТАСС). Кунта ÿсен-тăрансене хăвăрт ÿсме май паракан хĕвеллĕ ăшă çанталăк тăрать. Вăйлă тырпул пуласса кĕтеççĕ. Дангарин районĕнчи уйхирсенче кĕрхи тулă çÿллĕшĕ 115 сантиметăра, çурхи тулă 93 сантиметра çитет. Çылай районсенче урпа, тулă, сĕлĕ вырма пуçланă.

Çĕрмамăкĕ хăвăрт ÿсет. Унăн çÿллĕшĕ 20—25 сантиметра çитет. Сатсенчи çимĕçсем хăвăрт пиçеççĕ. Йăвăç улмисем, грушăсем, сливăсем хĕрелеççĕ. Пасарсенче колхозниксем черешньă, чей çырли тата çамрăк çĕрулми сутаççĕ.

Италире фашисла террор

ПАРИЖ, ийунĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Фашисла террорăн çĕнĕ хумĕ Италири чи пысăк центрсене пурне те çавăрса илнĕ. Тĕрмесем йăлтах арĕсленĕ çынсемпе тулса ларнă, унта шăнăçайман пирки пур çĕрте те тĕнĕ пекех тĕрмесем вальли уйрăм çуртсем уйăрса хунă.

Рабочисене, интеллигентсене, хресченсене, çавăн пекех тата вакă сутăççене çĕршерĕн арĕсленĕ. Пĕчĕк ачала хĕрарăмсене те арĕслеççĕ. Трапанре (Сицили) ĕçсĕр тăрса йулнă икĕ çынна—Наполипе Мадзареллана 5 çулăха катаргăна йанă, вĕсене хулара хăма çине: „Çăкăр тата ĕç парăр" тесе çырнăшăн айăпланă.

Строительства ĕçне пуçарса йамала

Халĕ колхозсенче строительства ĕçĕсене туса пымали хĕрÿ вăхăт пулса тăмала, иртнĕ çулта тума тытăннă выльăх-чĕрлĕх витисене туса çитермеле, çĕнĕрен витесем тума тытăнмала. Апла пулсан та, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсенче строительства ĕçĕ кирлĕ хăвăртлăхпа пырать теме çук-ха. Нарать йал агроучастькине кĕрекен колхозсенче строительства ĕçĕ пит йапах пырать. Кунти колхозсенче пĕлтĕр тума пуçăннă витесене тата ытти çуртсене туса çитерессишĕн çине тăрса ĕçлени çук.

Вăта Пукашри „Совет йалĕ" колхозра 45 лаша вырнаçмалăх, Наратйалĕнчи „Хĕрлĕ Сормава" колхозра 45 лаша вырнаçмалăх витесем тума пуçăнни икĕ çул çитет ĕнтĕ, çаплах туса çитереймеççĕ. Çак витесене туса çитерме халĕ те тытăнман.

Тури Карапашри Мичурин йачĕпе тăракан тата Вăрман Пÿлемĕчри Чапайев йачĕпе тăракан колхозсем выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленме тытăнман. Çак колхозсенчи фермăри выльăхсене хĕл вăхăтĕнче усрама йатарлаçа тунă ăшă витесем çук. Апла пулсан та, кăçал та ăшă витесем тăвасси çинчен шухăшламаççĕ.

Кĕчкейри „Дружба", Исменкассинчи „Çиçĕм" колхозсенче сĕт-çу фермипчи ĕнесем ăшă витесем пулман пирки сивĕ картасенчех хĕл каçрĕç. Çак колхозсенче витесем тума йăвăçсем те хатĕр, çапах ăшă витесем тума васкамаççĕ.

Мешелри „Туйлаш", Шупкари „Красный труженик" колхозсенче сысна фермин витисене зоовете инари катартнă пек туман пирки, вăл витесенче сыснасене хĕл каçарма пиг йăвăр. Унта сыснасем час-часах чирлеççĕ тата вилеççĕ. Çавăнпа çак колхозсенче кăçал çĕнĕрен витесем тума палăртнă. Строительства ĕçне халĕ те пуçăнман-ха

Анатри Карапаш, Куракасси, Çĕнйал-Пукаш колхозĕсенчи лаша витисене тĕпренех йусамала. Çак ĕçсене туса иртерме кунта та васкани çук-ха.

Строительства ĕçне хĕрÿ ĕçсем пуçланиччен туса çитермеле. Пĕр ĕçе теприпчен уйăрмала мар. Вĕсене пурне те çыхăнтарса туса пымала. Хĕл кунĕсене пур йенчен те тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илмеле.

Зоотехник П. Васильйев.

„Спартак" обшчĕствин çĕнĕ стадионĕнче

Ийунĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарта „Спартак" обшчĕствин çĕнĕ стадионĕ уçăлчĕ. Стадион уçăлнă йатпа çакăн пек вăйăсем пулса иртрĕç:

„Динамопа" „Спартак" обшчĕствисен ачасен командисем фудбол вăййипе тĕл пулчĕç. Вăйăра 2:1 шутпа „Динамо" команди çĕнтерчĕ.

„Спартакпа" „Динамо" обшчĕствисен хĕрарăм командисем волейбол вăййипе тĕл пулчĕç. 2:0 шутпа „Спартак" обшчĕствин команди çĕнтерчĕ.

„Спартакпа" „Динамо" обшчĕствисен арçын командисем волейбол вăййипе тĕл пулчĕç. Вăйă 2:0 шутпа „Динамо" команди çĕнтернипе пĕтрĕ. Городки вăййи 1:1 шутпа пĕтрĕ.

„Спартакпа" „Динамо" обшчĕствисен арçын командисем баскетбол вăййипе тĕл пулчĕç. 37:9 шутпа „Спартак" команди çĕнтерчĕ.

Ийунĕн 6-мĕшĕнче „Спартак" тата „Буревестник" обшчĕствисен пĕрремĕш командисем футбол вăййипе йулташла тĕл пулчĕç. Вăйăра 3:0 шутпа „Спартак" команди çĕнтерчĕ.

Суйлав йачĕпе массăлă вăйă

Майăн 30-мĕшĕнче Вăтакас Кипеч (Шăхасан р.) патĕнчи вăрман хĕррипче суйлав йачĕпе массăлă пысăк вăйă пулса иртрĕ. Вăйăна çичĕ йалтан пухăннă. Унта ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕ Никитин, ПСÇЛКС райкомĕн çекретарĕ Захарăв, райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Сорокин тата Кибеч суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат—МТС директăрĕ Пениççейĕв йулташсем пулчĕç.

Вăйă пуçланиччен митинг пулчĕ. Митинг хыççăн, тĕрлĕ вăйăсем, ташă-йурăсем пулчĕç.

М. Дмитрийĕв.

Суйлав умĕнхи социалисăмлă ăмăрту

Канашри вакунсем йусакан савăтра суйлав умĕнхи социалисăмлă ăмăрту куллен-кунах ÿссе пырать. Нумай рабочисем суйлав кунне—ийунĕн 26 мĕшне çитиччен уйăхри плана 200 процентран кайă мăр тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Инструментальнăй цехра Шарахутдинав, Кузнецов, Никитин йулташсем плана кашни кунах 290 процентран ытла тултарса пыраççĕ. Çакăн пекех таварнай комбинатри станок уйрăмĕнче ĕçлекенсем Демйанков, Фигатăв, Димитрийĕв йулташсем плана 300 процент ытла тултарса пыраççĕ, çменăра 30—40 тенкĕ ĕçлесе илеççĕ.

Йулашки кунсенче, социалисăмлă ăмăрту сарăлса пынă май уйрăм цехсем хăйсен производствăлă программине ытлашшипех тултараççĕ.

Д. Иванов.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Иккĕмĕш пилĕкçуллăх (4-мĕш çулхи кăларăм) займăн 7 мĕш тиражĕнчи обшчĕствăлă контроль представителĕ Сафиуллин йулташ тираж урапи çинчен пичет илет. Тираж Хусанта пулса иртнĕ.

И. Папков фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Тăван хула ÿснишĕн савăнатăп

Манăн мĕн пĕчĕкренпех çуртсем тунă çĕрте ĕçлес килетчĕ. Строительства анлăн сарăлса кайнă вăхăтра чăнах та вăра çав ĕçе тытăнтăм.

Епĕ малтан Шупашкарти кирпĕч савăтне килсе вырнаçрăм. Унта ударлă ĕçлерĕм. Вара пединститут çуртне тунă çĕрте чернорабочи пулса ĕçлерĕм, ĕçре квалификаци илсе ÿссе пытăм.

Халĕ правительства çуртне тунă çĕрте ĕçлетĕп. Тăрăшса ĕçлевĕшĕн кунта мана стахановецăн хисеплĕ йатне пачĕç. Стахановец йатне епĕ хамран нихăçан та вĕçертместĕп. Халĕ епĕ кулленхи нормăна йалапах 150—200 процент таран тултарса пыратăп.

Епĕ строительствăра ĕçлеме пуçланăранпа Шупашкар хули пит нумай улшăнчĕ. Ĕлĕк пушă вырăнсем пулнă çĕрте халĕ çĕнĕ çуртсем ÿсе-ÿсе ларчĕç. Кăçал пирĕн хула Совет Сойузĕн ытти пайĕсемпе чукунçулпа çыхăнчĕ. Çавна май Шупашкарăн малашлăхĕ пит пысăк. Епĕ тăван хула ÿснишĕн питĕ савăнатăп тата йаланлăхах Шупашкарти строительствăра ĕçлеме йулма шутлатăп.

П. И. Иванов.

Искусства хыпарĕсем

Çамрăк художниксем. Улатăрти художник-графиксем хатĕрлекен училишча 1934 çулта уçăлнă. Кăçал, училишчă пĕрремĕш кăларăм туса, 12 художник-график вĕрентсе кăларчĕ. Вуниккĕрĕн тăватă художникĕ Ленинградри художествă академине вĕренме кайаççĕ, ытисем Чăваш республикĕнче ĕçлеме пуçлаççĕ.

Училишчăра вĕренсе тухакан студентсем екзамĕн шучĕпе тунă художествăлă картинăсен выставкине организацилеĕнĕ. Ку выставкă студентсен пултарулăхне лайăх кăтартса парать, ăна ийулĕн пĕрремĕш числисенче Шупашкара куçараççĕ.

Чăваш художникĕсен çĕнĕ картинĕсем

„Всекохудожник" ийуль уйăхĕнче РСФСР-ти художниксем тунă картинсен выставкине уçать. Ку выставкăра чăваш художникĕсем тунă 38 картина пулаççĕ. Спиридонăвăн—„Дойаркă, „Орденоносец Степанăв", Сверчковăн—„Пирвайхи трактăр", Тогайевăн—„Разин пăлхавĕ" тата „Тапхăр", Воронăвăн—„Калинин 1919 çулта Улатăр хулине килни" т. ыт. те.

Чăваш художникĕсем, çак пысăк выставкăна хутшăнса, хăйсен пултарулăхне Мускавра пĕрремĕш хут кăтартаççĕ.

„Ленин тата Сталин халăх творчĕствинче"

Совет Сойузĕнчи халăх пултарулăхĕн Крупскайа йачĕпе тăракан çуртĕ 1938 çул вĕçленнĕ тĕле „Ленин тата Сталин халăх творчĕствинче" йатлă выставкă организацилет.

Çак выставкăна хутшăнма хатĕрленнĕ май Чăваш республикинчи халăх творчĕствин çурчĕ ийунĕн малтанхи кунĕсенче самоучкă-художниксен канашлăвне иртерчĕ. Канашлура самоучкă-художниксем хăйсем мĕнле картинăсем туни çинчен каласа пачĕç.

А. Демидăв.

Учителсене вырăнтан вырăна куçарас йĕркене пĕтермеле

Çутĕç органĕсенче пытанса пурăннă халăх тăшманĕсем шкул ĕçне аркатас тата учителсен кадрĕсене салатса пĕтерес шутпа, хăйсен пур тĕрлĕ ирсĕр ĕçĕсене тунипе перлех, учителсене çулсерен районтан районă, шкултан шкула вĕçĕмсĕр куçарса пынă. Çулсеренех вĕренÿ çулĕ пуçланас тĕлеле Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче куллен çĕршер учител пухăнса, танинĕ курма пулнă: вĕсенчен кашни хайне урăх шкула куçарнине хирĕçленĕ, халиччен ĕçлесе хăнăхнă шкулта малала та ĕçлесен тата ытларах усă куме пултарасси çинчен ĕнентерсе каланă. Анчах учителсем калакине кунта шута илмен, вĕсене нимĕнле сăлтавсăрах пĕр шкултан тепĕр шкула куçарнă. 1937 çулта Çутĕç Халăх Комиссариачĕ пĕтĕм учителсенчен 40 процентне шкултан шкула куçарса çÿретнĕ.

Тăшмансем çапла тунипе хăшпĕр шкулсем пачах учителсемсĕр тăрса йулнă, тепĕр çĕрте тата чи ответлă предметсемпе преподавателсем çитмен. Учителсем çук пи ки вара шкулсенче ĕçлеме кам тупăнчĕ, ăна йанă. Кун пек çĕрте, паллах, ачасем вĕренÿре кайа йулса пынă, пĕр класра икшер çул ларакансен йышĕ усĕ. 1935—36 вĕренÿ çулĕнче кăна пĕр класа иккĕмĕш çула йулнисем 11.429 çын, урăхла каласан, 7,7 процент пулнă.

Тепĕр йенчен çак сăтăрла ĕçе государства укçине тĕлсĕр тăккалас шутпа та тунă. Иртнĕ çул учителсене вырăнтан вырăна куçарса, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн бÿджетĕнчен 100 пин тенке йахăн расхутланă. Ку шута районри çутĕç пайĕсем тата шкулсем хăйсем çак йенпе расхутланă укçасем кĕмеççĕ, вĕсене пурне те пĕрле шутласан, питех нумай пухăнать.

Учителсене вырăнтан вырăна куçарса çÿрени шкулти вĕрентÿпе воспитани ĕçне тĕпрен аркатать. Пĕр шкулта пĕр çулталăк йе ытларах ĕçленĕ учител хăй вĕрентекен ачасене, вĕсен пĕлĕвĕсемпе пултарулăхĕсене, вĕсем хăйсене шкулта, шкул тулащĕнче мĕнле тыткаланине лайăх вĕренсе çитет, çакна кура учител хăйĕн ĕçне те кирлĕ пек йĕркелет. Анчах хăйăх-са çитсе, чипер ĕçлеме пуçласан, ăна тытаççĕ те урăх шкула куçараççĕ, кунта унăн çĕнĕ ачасемпе паллашма лекет, çĕнĕ, ен паллашса, ĕçе çĕнĕрен йĕркелесси çăмăл йапала мар.

Учителсене вырăнтан вырăна куçарас сийенлĕ йĕркене пĕтермеле. Учител хăй предметне лайăх пĕлекен çын çеç мар, вăл лайăх воспитател те пулмала.

Шкул работникĕсене вĕçĕмсĕр турткаланă вăхăтра, çутĕç органĕсем учителсен кадрĕсене ĕçре чăннипе большевикла сăнаса пырса, вĕсене пĕчĕкрех ĕçрен пысăкрах ĕçе куçарас тĕлĕшне нимĕн те туман. Йулашки çул çеç кунта кирлĕ улшăнусем тунă. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн йертсе пыракан работникĕсене улăштарса, пĕтĕмпех çĕнĕ çынсенчен, ĕçре ÿснĕ учителсенчен лартнă. Йертсе пырас ĕçе пĕтĕмпе 85 çын куçарнă.

Халăх тăшманĕсем çĕнĕ, хаĺь ÿсекен актива—йертсе пырас ĕçе ларгассине пур йенчен те чăрмантарса тăнă, пултарулă работниксен пуçарăвĕсене таптанă, аппаратсене хăйсен йевчисене лартнă.

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтермеле, шкулсемпе йертсе пырас ĕçе халăх шăн, социалисăмшăн, Ленин—Сталин партийĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен, пирĕн шкул пурнăçне тивĕçлипе йĕркелеме пултаракан çынсене лартмала, çак çĕнĕ работниксене ĕçре куллен йертсе пымала, кирлĕ канашпа пулăшмала вĕсен паха пуçарăвĕсене малала çĕкленме пулăшмала. Кашни çĕнĕ работник партипе совет органĕсен пулăшăвĕпе тимлĕхне куллен туйса тăтăр.

Социалисăмла çĕршывра культура строительстви вĕçĕмрен ÿссе, сарăлса пырать. Шкулсен ĕçне тĕпрен те татăклăн лайăхлатас тесен, халăха çутта кăларас ĕçпе йертсе пыракан кадрсене çĕнĕ, пултарулă çынсемпе, партири тата партире тăман большевиксемпе куллен çирĕплетсе пымала.

Судаков.

Чукунçул строителствинче

Канаш—Шупашкар чукунçулĕн тĕп çулне хурса пĕтерчĕç. Анчах кунпа ĕç пĕтмест-ха. Малта тата та пысăк ĕçсем тăраççĕ. Строителствăра кăçалхи çулта 6 мĕлйун тенкĕлĕх ĕç тумала.

Çапах та чукунçул строителствин управленийĕ тата участкă пуçлăхĕсем кирлĕ таран большевикла ĕçлени курăнмасть-ха. Рабочисен йышĕ пĕрмайах улшăнса тăрать. Халĕ строителствăра икĕ пин çынна йахăн çитмест.

Хăшпĕр райĕçтăвкомсем чукунçул строителствине пулăшас ĕçе хакламаççĕ, Строителствăра Ишлей районĕнчен 7 çын, Канаш районĕнчен 12 çын çеç ĕçлеççĕ.

Строителства участкисенче ĕçсем питĕ йапăх пыраççĕ. 2-мĕш участкăра материалсене перекетлĕ тыткаламаççĕ, 4-мĕш участкăра халĕ те çыхăну йапалисене (телеграф, телефон, çелектăр) тума тытăнман.

Ĕçре дисциплинă çуккипе чукунçул çинче аварисем пулкалаççĕ.

Çаксем ĕнтĕ пурте чукунçул строителствин руководителĕсем çитменлĕхсемпе кирлĕ таран кĕрешменни çинчен калаççĕ.

„Лини хывса тухрăмăр, урăх васкамасан та йурать" тесе лăпланнине хирĕç парторганизацисен вирлĕн кĕрешмеле.

Промышлĕннăç кунĕ

Вакунсем

Ийунĕн пирвайхи пилĕккунлăхĕнче Канашри вакунсем йусакан савăт 59 вакун вырăнне 47 кăларнă, йе плана 80 процент тултарнă; 500 рессор вырăнне 410 кăларнă, плана 82 процент тултарнă, лини çине 60 мăшăр кустăрма вырăнне 66 мăшăр панă, вăл 110 процент пулать.

Хĕрлĕ йалавлă йăвăç каскалакан цех халĕ те малта пырать, вăл плана 134 процент тултарнă.

Çу

Йетĕрнери çу çапакан савăта ремонт туса пĕтернĕ. Ийунĕн 11-мĕшĕнче савăт ĕçлеме пуçлать. Хатĕрленĕ сырйо çулталăк ĕçлеме çитет. Рабочисем, инженерла-техникăла работниксем çулталăк планне Октабер революци праçникĕччен тултарма сăмах пачĕç.

Чăвашвăрмантрест иккĕмĕш квартал планне ийунĕн 5-мĕш тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКĂ (процентпа)

Вăрман хатĕрлессипе вăрманпромхозсен йачĕсем		Лашасемпе турттарса кăларасси	
Акшкăл	—74.2	Акшкăл	—11,8
Çĕмĕрле	—25,8	Çĕмĕрле	—18,9
Вăрнар	—25,1	Вăрнар	—18,3
Йепреç	—17,6	Йепреç	—20,3
Кире	—11,6	Кире	—25,5
Улатăр	—18,8	Улатăр	—23,1
Шăмăршă	—26,9	Шăмăршă	—32,4
		Алтышĕвă	—24,0
Мĕн пурĕ	—26,9		21,6

Механизациленĕ çулсемпе турттарса кăларасси

Мехпунктсем	
Кумашкин	—17,2
Сура	—22,5
Акшкăл	— 9,6
Кире	—22,0
Соловйовкă	—16,8
Чернореченкă	—21,8
Çаракла	— 6,2
Шăмăршă	—19,7
Атрат	—32,5
Канаш	—13,9
Мĕн пурĕ	18,5

СУД

Ачасенчен мăшкăланакан

Йадринори (Йетĕрне районĕ) туллимар вăтам шкулта вĕрентекен учител Петр Тихăнавич Кондратйев ачасене йĕркелĕ вĕрентес вырăнне, вĕсенчен мăшкăланă.

Урoксенче вĕренекенсен ыйтăвĕсем çине тивĕçлĕ ответ паман, вĕсене кăшкăрса йатласа кăна пĕтернĕ, кирлĕ мар усал сăмахсем каласа намăслантарнă.

Кондратйев йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă. Хăй патĕнче вĕренекен хĕрачапа йурату çыхăнăвĕ тытнă, хăйĕн арăмне хĕнесе пурăннă, ăна комсомолецсен пухăвĕсене йаман. Шкул техничкине—Степанăвăна пĕр айăпсăрах хĕнесе пĕтернĕ.

Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ майăн 27 мĕшĕнче çак ĕçе пăхса тухса Кондратйева Уголовнăй Кодексăн 110-мĕш статйин 2-мĕш пайĕ тăрăх айăпласа, икĕ çул хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

М. Йемельйанав.

ХРОНИКА

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Петр Димитрийевич Краснов йулташа Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çумĕнчи Чăваш АССР представителĕ тума йышăннă.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Петр Дмитрийевич Краснов йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ председателĕн пĕрремĕш заместителĕн ĕçĕсенчен тата Государствă План Комиссийĕ председателĕнчен хăтармала тунă.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Филип Алексейевич Матвейев йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн пĕремĕш заместителĕ тунă.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Александр Васильевич Сомăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителне лартнă.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Михаил Андрейевич Андрейев йулташа Чăваш АССР Государствă План Комиссийĕ председателне лартнă.

Йăнăша тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатра 1937 çулхи нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче тухнă умстатйара Трак районĕнчи Тĕрер шкулĕнче ĕçлекен Ф. Ф. Федотăв учител çинчен, вăл колхоза хирĕçле çын, тесе çырни тĕрĕс мар.

Уйкас Кипекре

Уйкас кипекри (Шăхасан р.) Тельман йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме тăрăшаççĕ.

Халĕ колхозниксем аслă çул тунă çĕре 10 кубла метр чул, 100 кубла метр хăйăр турттарса хатĕрлерĕç.

Кунсăр пуçне колхозра 70 лаша вальли вите тата тăмран çапса 200 сурăх вальли вите тума тытăннă. Колхозниксем ку витесене суйлав кунеччен туса пĕтерес тесе ăмăртса ĕçлеççĕ.

И. Шорникăв.

Шупашкар хулинчи çтена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

Ийунĕн 9-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре ЧАССР Верховнăй сучĕн залĕнче (Красная площадь) Шупашкар хулинчи учрежденисенчи, предприйатисенчи, шкулсенчи тата урам комитечĕсен çтена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулать.

Кун йĕркинче вырăнти пичетĕн суйлав кампанинчи ĕçĕсем çинчен. Доклад тăвакан П. Жданкин йулташ.

ПСК(б)П хула комитечĕ.
„Красная Чувашия".
„Чăваш Коммунĕ" редакцийĕсем.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Çĕрпÿри фельдшĕрсен шкулне ПРЕПОДАВАТЕЛСЕМ КИРЛĔ:

Хими, биологи тата латин чĕлхи тăрăх.
Физикăпа математика тăрăх.
Физкультурăпа çар ĕçне вĕрентекен инструктăр,
Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх,

ДИРЕКЦИ.

2—1

„КАПКĂН"
ЖУРНАЛ МАЛАШНЕ
(ийуньрен пуçласа) уйăхра
икшер хут тухма пуçлать
ХАКĔ ÇАВĂХ:
уйăха—40 пус; çурçула 2 т. те 40 п.; çулталăка 4 т. 80 пус.
„КАПКĂН" журнал редакци.

3—3

Йалхуçалăх банкĕн Чăваш республикĕнчи кантурне ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ Машинисткă-çекретар кирлĕ

Условисемпе паллашма Йалхуçалăх банкне пымала.

2—2

Пайан кино-театăрта çĕнĕ, саслă фильм ГОД ДЕВЯТНАДЦАТЫЙ пулать

Уполномоченный Чувашглавлита № 284
13
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.